30-48

ДАНИЛОВ (ЂАЛТУН)

# КАЛАВСЕМ

СССР-ти Халăхсен Тĕп Истаттĕлстви
Мускав ★ 1930

М. ДАНИЛОВ (Ҫалтун)

# КАЛАВСЕМ

СССР-ти Халӑхсен Тӗп Истаттӗлстви
Мускав * 1930

Главлит № А 62164 Заказ 526 Тираж 3000

Книжная ф-ка Центриздата Народов СССР.
Москва, Шлюзовая набережная, 10.

# ШАХТОР

## I.

Çĕр-кăмрăкĕ кăларакăн „А“ йатлă рутник тиректăрĕ И. П. Карнейĕв хăй капинетĕнҫе, хĕрлĕ тăлапа витнĕ, урисене çавăрса тунă йуман сĕтел хушшинҫе ларат; умĕнҫе пĕр листа шурă хут сарăлса выртат, сĕтелли çинелле пуçĕпе ӳпĕннĕ те, хуҫĕ çине çав ҷери васкаса, хĕрлĕ кăранташпа çырат.

Капинетĕнҫе шăп, никам та çук, хăйне хирĕç çтена çумĕнҫе çакăнса тăракан сехет анҫах ывăнма пĕлмесĕр: ҫик-тик... тутарса майпен шаккат; стрелккисем вăхăт вуник сехет çитнине кăтартаççĕ.

Пилĕкĕмĕш нумĕр шахтă умĕнҫе туллийех шахтьорсем шавлаççĕ; хăшĕ кăшкăраççĕ; хăшĕ йурлаççĕ, хăшĕ

шăхăраççĕ, хутра-ситрен вăрçкаласа илекенсем те пур. Çĕклекен машшинă пĕр ҫарăнмасăр ĕçлет. Пĕрисем кĕлет*) çине ларса шахтăран çӳлелле тухаççĕ, теприсем айаллалла ларса анаççĕ. Тухаканнисем трупаран тухнă пек хуп-хура, шăлĕсем анҫах кăшт шурă курăнаççĕ, тата куçĕсем кăвар пек йал-йал тăваççĕ. Тумтирĕсем тăрăх шапăртатса шыв йухаť. Хăйсем те, ĕç пĕтерсе тухнипе, савăнăçлă кулкаласа калаçаççĕ. Тухнă майпа тӳрех паракалла, йĕпе тумтирĕсене шапăртаттарса ҫупаççĕ. Анаканнисем — шурă питлĕ - куçлă, хăйсем çилĕлĕ тĕслĕ. Шахтăра ĕçлесси йăвăр çав, те çавăнпа тем те пĕр каласа вăрçса анса кайаççĕ. Çӳлти откатҫăксем кăмрăкпа, поротăпа**) тултарнă ваконеткисене васкаса тĕртсе кайса, отвал çине йăвантарайăвантара йараççĕ.

*) Клет—шахта ларса анмалли.

**) Поротă—тăпра, çĕр.

Вăхăт ҫăнах та вуник сехет, шахтăра ĕҫлекенсен улăшăну вăхăҫĕ.

Карнейĕв пĕр минута ҫырма ҫаранса, кăранташне ҫырса пĕтермен хуҫĕ ҫине пăрахрĕ те, аллисемпе хăвăрт сĕтел ҫине ҫавсаланса, хурт уйăрнă вăхăтра шавланă пек шавлакан шахтёрсем ҫине хура куҫĕсемпе шăтарас пек пăхса, иртнĕ пурнăҫĕ ҫинҫен аса илҫĕ:

Хаљ нумайах та пулмасť Карнейĕв та шахтăра ĕҫлеҫҫĕ. Нимĕн ҫинҫен те шухăшлама пĕлместҫĕ. Хăйĕн кайлипе тимĕр кĕреҫине анҫах пĕлеҫҫĕ. Шалпар шахтёр йĕмĕ, шыв витмен преҫент пиншак, сарлака ҫунатлă шĕлепке тăхăнса ҫӳреҫҫĕ. Вуник ҫула ҫитсенех ашшĕпе пĕрле шахта лаша хăвалама ĕҫе кĕҫĕ. Ҫав шахтах, унăн умĕнҫе кăткăсем пек вĕркĕшеҫҫĕ—унăн тахҫанхи йулташĕсем—тусĕсем...

Карнейĕв та йурлама, кăшкăрма йуратаҫҫĕ, вăхăҫĕ-вăхăҫĕпе кăкарнă анҫăк пекех вĕреҫҫĕ. Ĕҫрен тухсан

килне пыраҫҫӗ. Сахӑрсӑр ҫей, хӑш ҫухне ҫӑкӑрсӑр та, ӗҫкеленӗ вӑхӑтсем пулкаланӑ.

Ашшӗпе иккӗн ӗҫлеҫҫӗҫ. Камшӑн?.. Мӗншӗн?.. ӗҫленине пӗлместҫӗҫ...

Праҫниксенҫе те, ахаљ ҫух те Карнейӗв ҫав шалпар йӗмпе, ҫав шыв витмен преҫент пиншакпах вӗҫтерсе ҫӳреҫҫӗ... Каҫсерен, хӑш ҫухне кӑнтӑрла та, ашшӗпе амӑшӗнҫен ыйтмасӑрах шинккисене*) кайаҫҫӗ: унта укҫалла картла вылаҫҫӗ, ҫулӑ сӑмахсемпе вӑрҫаҫҫӗ, кампа лекнӗ унпа ҫапӑҫаҫҫӗ, ӑнӗ ҫухалиҫҫен ерех ӗҫсе ӳсӗрӗлеҫҫӗ, хӗрарӑмсене ӑҫтан лекнӗ унтан „хыпалаҫҫӗ“. Ҫавӑнпа та вӑл сахалах мар куҫтускӑра ларнӑ; сахалах мар унӑн ҫамрӑк йунне хӑнкӑласем ӗҫнӗ. Сахалах мар вӑл фараонсенҫен**) ҫупкӑ

---

*) Шинкки—ерех сутакан вырӑн.
**)Фараонсем—политсейскисем.

ҫинӗ. Хăш ҫухне хăй те пăхсах тămасттҫӗ, тӳрех сăмсаран йанлаттарҫҫӗ. Ирхине ухмах пекех килне таврăнаҫҫӗ; хура куҫӗсем хӗп-хӗрлӗ йуна пӗвенеҫҫӗҫ. Ашшӗ ăна унщăн вăрҫаҫҫӗ; ҫас-ҫасах хӗнеҫҫӗ. Анҫах хӗненин усси пӗртте пулман. Йулашкинҫен ашшӗ ăна сарттире хупса лартаҫҫӗ; унта вăл „тутлă“ шăршă шăршласа сахалах мар кунӗ-кунӗпе ларнă. Ҫапла сарттир „имҫамӗпе“ тӳрлетнӗ хыҫҫăн, Карнейӗв пăртак лăпланса ерне, хăш ҫухне ытларах та, ниҫта та тухмасăр—ҫирлесе выртаҫҫӗ. Вăхăт иртнӗ майпа ыратнисем майпен манăҫа кайаҫҫӗҫ. Унтан каллех ҫӗнӗрен пуҫласа йараҫҫӗ...

Карнейӗв вунтăхăр ҫула ҫитсен, ашшӗпе амăшӗ ăна авлантарас тесе те ҫылай калаҫкаларӗҫ. Вăл хăй те авланасшăнҫҫӗ. Анҫах рутникре ăна „йурăхлă“ хӗр тупăнмарӗ, хăй „илес“ тенӗ хӗрсем пымарӗҫ; „пырас“ теченнисене хăй илмерӗ. Ҫапла вара авланмасăрах салтака кайрӗ.

Карнейёвăн пурнăçĕ ҫăнах та йўçĕ кăшман пек йўçĕ пурнăçҫĕ...

Рутникре миçе ҫиркў, çавăн ҫул хупахҫĕ. Миçе анҫăк, çавăн ҫул пупсем, фараонсемҫҫĕ. Миçе сарттир, çавăн ҫул шинккисем, унта майрасем туллийехҫĕ. Шинккисенҫен ерех кĕтмелле параҫҫĕç. Çавăнпа та Карнейёв кантуртан шалу илсе курман, йалапах парăмлă пулса йулаҫҫĕ...

Çапла ĕçлесе пурăннă çĕртех, Карнейёв çинҫе сакăрвунă пилĕк тенкĕ парăм пуçтарăнса çитрĕ. Çавăн пирки вăл урăх рутнике куçас тесе те ҫупкаларĕ. Анҫах парăмне ĕçлесе татмасăр ăна кантуртан паспăртне аллине памарĕç...

Рутникре пĕр Карнейёв анҫах мар. Ун пеккисене—вуннă, çĕр, пин ытла та тупма пулаҫҫĕ... Пурне те вĕсене пĕр аршăнпа виçеҫҫĕç; пурте вĕсем пĕр çулпа пуçсене ҫиксе утаҫҫĕç. Унталла-кунталла пăрăнма май пулман. Çулăн икĕ йеннипе çын сиксе каçмалла мар тарăн варҫҫĕ,

унтан пӑтранҫӑк сивӗ шыв йухса выртаҫҫӗ. Пурте вӗсем ӗҫлеҫҫӗҫ. Камшӑн?.. Мӗншӗн?.. ӗҫленипе пӗри те пӗлместҫӗҫ...

Карнейӗва шинккисенҫен ерех пами пулса, ӗнсинҫен ҫыша-ҫыша кӑлара пуҫласан: „кӑна тӗне кӗмен тутарсем, йеврейсем тӑваҫҫӗ“, тесе сура-сура вӑрҫаҫҫӗ.

Пӗр вӑхӑтра Карнейӗвӑн пурнӑҫӗ „кӗпӗрнаттӑр пурнӑҫӗнҫен те“ наҫарланса ҫитрӗ: ашшӗ шахтӑра ваконеткӑ айне пулса урине хуҫсан, ӑна ӗҫрен кӑларса йаҫӗҫ; амӑшӗ ӳслӗк ҫирӗпе ҫирлесе вилсе кайрӗ. Хӑйне, хӗрарӑм ҫуккипе, паракран хуса кӑларса йаҫӗҫ...

Ӑҫта кайас? Мӗн тӑвас? Камран ыйтас?.. Хута кӗрекен никам та ҫук. Ӑҫта ҫитнӗ унта, выҫӑлӑ-тутӑлӑ тенӗ пек пурӑнкалаӗ. Тӗнҫе ахаљ те тӑвӑр, халљ пушпех тӑвӑрланса ҫитрӗ... Пӗр вӑхӑтра йе шыва, йе шахта сиксе вилес, тесе шухӑш

тытрĕ. Çук, вилес килмест! Çамрăк сыннăн çут тĕнђере пурăнас килет!..

Пин те тăхăрçĕр вунтăваттăмĕш çул Карнейĕв „ăраскалĕнђен“—патшасем „турă хушнă тăрăх“ вăрçă хускатса йађĕç. Ана вăл та, никам та пĕлмен. Те вырăс патшине нимĕç патши çине, те нимĕç патшине вырăс патши çине кайма хушнă турă?

Вăл вăхăтра пĕлме те кирлĕ пулман, мĕншĕн тесен вăл ĕç Карнейĕвсăр, ыттисемсĕр пуçнех пит „лайăх“ пулса пынă. Ун ђухне вăл „мĕнле те пулсан кантуртан паспăрта алла илесђĕ те, ăçта та пулин куç курман, хăлха илтмен çĕрелле тарасђĕ“, тесе шухăшлађђĕ. Пăртакçă кайарахпа „çуралнă çĕр-шыва йут патшалăхри, тата хамăр хушăри тăшмансенђен сыхламалла“ тенине вăл тин пĕлђĕ. Ку сăмахсене ăна çĕр кăмрăкĕ кăларакан „А“ йатлă рутникĕн управђайтшђийĕ А. Мурçин, Карнейĕв хăй ирĕкĕпе салтака сырăннă ђух, каларĕ. Çак капинетра,

çак урисене çавăрса тунă йуман çĕтел хушшинђе ларађђĕ вăл, анђах ун ђухне сĕтел çине хĕрлĕ тăла мар кăвак тăла витнĕђђĕ.

Карнейĕв хăй ирĕкĕпе салтака çырăнсан, управљайушђи ăна çул çине „куђђенеç“ тесе пилĕк тенкĕ укçа пађĕ. „Сакăрвунпилĕк тенкĕ парăмна салтакран ђĕрĕ тавăрăнсан ĕçлесе татăн. Вилсен... ђорт с тапой... ха-ха-ха“!.. хулăн тутисене сарса йарса кулђĕ. Унтан вăл управљайушђине ђĕрĕ тавăрăнсан парăмне ĕçлесе татмалла“ тесе, хăй аллинђен çыру пађĕ. Ун ђухне вăл алă пусма пĕлместђĕ, уншăн хăйпе пĕрле салтака кайакан йулташ—Ђурккин алă пусрĕ.

Пилĕк тенкĕ „куђђенеçе“, аллине илсен, Карнейĕв кантуртан тухса, пăртак унталла-кунталла пăхкаласа тăђĕ те, тӳрех пĕлекен шинккинелле утрĕ. Шинкки тытакан майрин йатне маннă ĕнтĕ. Анђах вăл саккăрăмĕш номĕр шахтăран инçе мар суту-илӳ тăвађђĕ; виç-тăват хĕр тытса тăрађђĕ.

Хӗрӗсем ҫитеймесен, хӑй те арҫынсене йӑпаткалаҫҫӗ... Унта ҫитсен, Карнейӗв салтака кайнӑ хуйхӑпа йулашкинҫен мӗн ҫул кирлӗ, ҫавӑн ҫул ӗҫрӗ. Каҫ выртнӑшӑн аллӑ пус тӳлерӗ те, выртса ҫывӑрҫӗ. Ирхине тӑрсан пуҫӗ ӑвӑс вутти пек шартлатать. Кӑсйине хыпаласа пӑхрӗ, мухмӑр тӳрлетмелӗх йулман. Тутисене ҫыртса ыраттарнипе, хуҫа майри ҫине ҫиленсе ҫитрӗ те, ҫунтан тарӑхса вӑрҫса тӑкрӗ. Унтан шыв витмен преҫент пиншакне тӑхӑнса, майра куҫӗнҫен лаҫлаттарса сурса, алӑ памасӑрах тухса кайрӗ.

Карнейӗв ҫав тери ҫиленсе ҫитнипе, тӑван ашшӗнҫен пиллӗх илмесӗрех „ҫуралнӑ ҫӗр-шыва тӗрлӗ тӑшмансенҫен сыхлама“ хуланалла тухса утрӗ.

## II.

Салтакра Карнейӗв икӗ уйӑхлӑх уҫҫепни каманта вӗренме кӗҫӗ. Унта вӑл ҫырма, пӗрер саспаллин хушса

вулама вĕренҫĕ; тата кухҥăра тешурни пулсан, шутласаçăкăр, портси валеçсе пама вĕренҫĕ.

Уҫҫепни камантă пĕтерсен, ăна йефрейттăр ҫынĕ парса оттеԉоннăй, комантир туса хуҫĕç.

Карнейĕв оттеленинҫе мĕн пурĕ вуникĕ салтакҫĕ. Вĕсем çине вăл:

— Ей, вы „çереҥккийе“ тесе кăшкăраҫҫĕ. Мĕншĕн тесен малтанах полкка пырсан ăна хăйне те „çерйак“ тесе вăрçаҫҫĕç. Çавăнпа та вăл хăйĕн оттеленинҫи салтакĕсене хăйне йепле хĕртнĕ çапла хĕртеҫҫĕ: пурне те кашни кунах „пот винтовккă“ тăратаҫҫĕ, ҫеретпе аттисене тасаттараҫҫĕ, кухҥĕрен йашка-пăтă йатса çитереҫҫĕç. Ирхине пракулкка хуса тухсан:

— Пе-ком-м-м!.. камантă парса ҫуптарса йараҫҫĕ те, лешсем вара тăсăлса ӳкиҫҫенех ҫупаҫҫĕç. Ҫарăнсан пуçĕсенҫен мăкăрланса тĕҫĕм тухса тăраҫҫĕ.

Славеснăçа ларсан, хăшĕ те пулин мĕн те пулин йунăш каласан, кăмака трупи умне тăратса:

— Епĕ ух-мах!

— Ма-нăн арăм п... тесе кăшкăрма хушаҫҫĕ. Карнейĕв хăй те пат шан аслă хĕрĕн йатне пĕлменнипе:

— Епи-ир пурте ухмахсем... тесе, сахал мар кăшкăрнă. Анҫах вăл мĕншĕн кăшкăрнине хăй те пĕлместҫĕ. „Вăрçă тистсиплини“ тесе шутлаҫҫĕ. Çавăнпа та салтаксене хăйне ташлатнă пек ташлатаҫҫĕ.

Карнейĕва хăйĕн „çерйакĕсене“ нумай вăхăтах ташлатма памарĕç. Уҫҫепни камантă пĕтерсен пĕр-икĕ ернеренех, маршшăвăй ротпа пĕрле фронта йаҫĕç.

Фронта çитсен хулари пурнăç пĕтĕмпех улшăнҫĕ: „çерйаксем“ Карнейĕва итлеми пулҫĕç, кухњăна йашка илме те хăй çӳре пуçларĕ, аттисене тасатма пĕтĕмпех манса кайрĕ, çиййĕнҫи кĕпи-йĕмне ишкер-виçшер уйăх улăштармасăр тăхăнса çӳрет,

пыйтӑсем имӗ-симӗ те ҫук, расветҫӗксем пек пытанса ҫӳреҫҫӗ, ҫӗрӗҫӗрӗпе ҫывӑрма памасҫӗҫ. Карнейӗв пӗтӗмпех аптраса ҫитрӗ. Ҫыру тавраше ниҫтан та илмест. Ашшӗ патне вун-вунпилӗк ҫыру та йарса пӑхрӗ, ҫук, вӑл та пӗр ҫыру та йамасҫ: те вилӗ, те ҫӗрӗ?.. Нимӗн пӗлмесӗр пурӑнаҫ. Пӗр вӑхӑтра фронтран тарас тесе те шутларӗ, ҫук, ӗҫӗ тухмасҫ. „Ҫавса ҫывӑх та, ҫыртма инҫе“. Тытсан, персе вӗлересрен хӑраҫҫӗ.

Вӑрҫӑ ҫӑнах та вӑрҫӑ пекехҫӗ ӗнтӗ: салтаксене ҫавапа ҫулнӑ пек ҫулаҫҫӗҫ. Пуҫ тӑррипҫе шрапнел, ура айӗнҫе помпӑ ҫурӑлаҫҫӗ: хӑшӗн— урине, хӑшӗн аллине татса ывӑтса йараҫҫӗ. Варшавран Миттавӑ хулине ҫитиҫҫен ҫӗр ҫӗтресе, тар шӑршипе сывлӑша хупласа тӑҫӗ. Аҫта пӑхнӑ унта ҫӗрме пуҫланӑ ҫын виллисем йӑванса выртаҫҫӗҫ.

Карнейӗвӑн ҫав тери тарӑхса ҫитнӗ вӑхӑтсем пулаҫҫӗҫ, „Ҫасрах вилесҫӗ“ тесе, шрапнелсем ҫурӑлнӑ, пу-

ђăсем шăхăрнă çĕре йури тухса çӳређђĕ“, çук, пéри те ăна лекместђĕç. „Вилĕмĕ те тарђĕ пуљ манран“... тесе тарăхађђĕ.

Виçĕ çул хушши Карнейĕв „хăй çуралнă çĕр-шыва тĕрлĕ тăшмансенђен сыхласа“ вăрçрĕ. Камсем?.. Ăçта вăл тăшмансем?.. вĕсене вăл хăй куçĕпе курман та; пĕлмест те. Мĕн кăна курмарĕ, мĕн кăна тӳсмерĕ вăл... Вăхăђĕ-вăхăђĕпе çутă хĕвел çухалса тăрађђĕ, вăхăђĕ-вăхăђĕпе çут тĕнђе тепĕр май çаврăнса ӳкессĕн туйăнађђĕ. Пĕр Карнейĕв анђах мар, унта вĕсем темиçе мĕлйунăнђђĕ. Пурте вĕсем кам тăшман, кам йулташ иккĕнне пĕлместђĕç. Тăшманĕсем те, йулташĕсем те хăйсемпе пĕрлех çӳређђĕç. Хăйсем суккăр та марђĕ; анђах суккăртан та суккăр пек пĕрнепĕри курмасťђĕç. Хир кайăкĕсем пек пĕр-пĕринђен пытанса çӳређђĕç. Пытанмалли вырăн оккопђђĕ. Оккоп умĕнђе йĕплĕ пралукран тунă картађђĕ.

Миттавӑ хулине пӑрахса тарнӑ кун Карнейёва расрывной пуђӑпа сулахай айаккинђен суранларӗҫ; пуђӑ ҫитсе лексен пӑшалне пӑрахса, аллисемпе суранӗнђен йарса тытрӗ те, пуҫӗ ҫавӑрӑнса ҫӗре йӑванса кайрӗ; йун нумай кайнипе пӑртак выртсан ӑнӗ те пӗтрӗ.

## III.

Виҫҫӗмӗш кунне тин ласаретра, ӳђӗ ҫумне кӑпӑк пек ҫемҫе хӗрарӑм аллисем пырса сӗртӗнсен, Карнейёв вӑранса ӑнкарма пуҫларӗ. Куҫне уҫса пӑхрӗ те, умӗнђе пӗр арҫынпа пӗр хӗрарӑм шурӑ шупӑрсем тӑхӑнса тӑнине курђӗ: арҫыннине—рутникри управлайушђи Мурҫин пуђ, хӗрарӑмне—йулашки пилӗк тенкӗ укҫине ҫаратса йулнӑ майра пуђ тесе, иккӗшне ик йеннелле, аллисемпе ђышса йарса:

—Кайӑр кунтан!.. Есир каллех-и! манӑн йулашки ђуна илме кил-кил-

тӗр-и! тесе, урисемпе тапкаланса, хайар сасӑпа кӑшкӑрса йаҫӗ.

Арҫынни Карнейӗвӑн аллисенҫен тытса вӑл суранланнине, халӗ ласаретра выртнине каласа парсан тин Карнейӗв ӑнласа илҫӗ. (Арҫынни— тухтӑр, хӗрарӑмӗ—ҫестра пулнӑ). Ҫестра унӑн йунлӑ суранне ҫуса тасатнӑ. Карнейӗвӑн ӑнӗ пӗр кӗрсен урӑх ҫухалмарӗ вара.

Ҫестра ун суранне ҫуса тасатса, шурӑ пинтпа ҫыхса пӗтерсен, Карнейӗв унтан хӑйӗн айӑпне каҫарма ыйтрӗ. Ҫестра хирӗҫ нимӗн те ҫӗнмерӗ, анҫах икӗ кӑвак шӑрҫа пек куҫӗсене выљатса, тутисене йӑл култарҫӗ. Унтан кӑсйинҫен пӗр пӗҫӗк ҫеҫ листа хут кӑларса, Карнейӗвӑн койкки ҫине ларҫӗ те ҫыра пуҫларӗ. Ҫав вӑхӑтра тухтӑр урӑх палаттӑна тухса кайрӗ.

— Санӑн хушамату? тесе ыйтрӗ унран ҫестра хуллен.

— Карнейӗв, терӗ вӑл.

— Йату?

— Иван.
— Аҫу йаҫӗ?
— Петровиҫ.
— Миҫе ҫулта?
— Ҫирӗм иккӗре.
— Авланнӑ-и?
— Ҫук.
— Хӑш ҫаҫрен?

— Ҫирӗм саккӑрӑмӗш Ҫӗпӗрски стрелкковӑй полк, пӗрремӗш рот, пӗрремӗш всвот, пӗрремӗш оттеленни, терӗ Карнейӗв, кухҫӑра ҫешур тӑнӑ ҫух ахвитсер умӗнҫе раппӑртланӑ пек, пӗр такӑнмасӑр шашӑртаттарса хуҫӗ. Ҫестра унӑн хура куҫӗсенҫен шӑтарас пек пахса тӑҫӗ. Вӑл куҫӗнҫен пӑхнипе, Карнейӗв пӗр вӑхӑта суранӗ ыратнине те манса выртрӗ. Ҫестра койкки ҫинҫен тӑрса кайа пуҫласан тин:

— Ҫестра, ан кай-ха, пӑртак ларха. Сансӑр пуҫне епӗ хӑратӑп, тесе йӑлӑнса ыйтрӗ вӑл.

Ҫестра ун ҫине ҫавӑрӑнса пӑхрӗ те:

— Йе, лăпланса вырт-ха. Унсăрăн сурану ыратĕ. Епĕ пăртак тăрсан килĕп тесе, майпе утса тухса кайрĕ. Карнейĕв, çестра кусĕнҫен сухалиҫҫенех, ун çине пăхса выртса йулҫĕ.

Çестра йунашар палатта кĕрсе курăнми пулсан, Карнейĕва çав тери хăрушă пулса çитрĕ. Хăранипе ҫут „караул“ кăшкăрса йараҫҫĕ, анҫах çестра илтсен лайăх мар пуласран именҫĕ.

Ласаретра суранлă салтаксем çав тери нумайҫҫĕ. Койккă çитмен пирки нумайĕшĕ çара урайĕнҫе йăванса вырта҆ҫҫĕç. Тӳсмелле мар йăвăр сывлăш ăшĕнҫе симĕс пуçлă хура шăнасем йавăнса вĕççе çӳреҫҫĕç; ывăннă тĕслĕ саниттарсем йатлаçнă майпа вĕлле хурҫĕсем пек сĕрлесе тăраҫҫĕç. Саниттарсем пĕр ҫарăнмасăр йатлаçа-йатлаçа, кусĕсем хупăнса та çитмен салтаксене наçилкке çине хурса таçта йăта-йăта тухса кайаҫҫĕç. Вĕсен вырăнне урайĕнҫе

выртаканнисем çапăçас пек пĕр-пĕринпе йатлаçса хăпара-хăпара выртаҫҫĕç.

Карнейĕвăн койккипе йунашар урайĕнҫе кăвак сухаллă салтак выртаҫҫĕ. Вăл йатлаçмасҭҫĕ те, хускалмасҭҫĕ те, хупăнса çитеймен куç харшисем те сиккелеместҫĕç; пĕр çĕре ҫăмăртаннă хулăн тутисем тăрăх симĕс пуçлă шăнасем йулхавăн пусса утса çўреҫҫĕç. Карнейĕв ун çинелле тинкерсе пăхрĕ те, кăвакарнă лапҫăк сăмсинҫен хăраса:

— Анне!!! тесе кăшкăрса йаҫĕ.

— Мĕн, аннўн хўрин аннў пур-и! Ахăрса выртан. Кунта сана аннў арки çине кĕрсе ларса, хăйма çийесси мар çав, тесе вăрçса такрĕ ăна йунашар койккă çинҫе выртакан татăк алăллă, шĕвĕр сăмсаллă салтак.

Карнейĕв хыпаланса пуçне утийал айне ҫиксе, тепĕр йеннелле çавăрăнса выртрĕ. Ҫылай выртсан, хăрасси манăçа кайса, пуçне тĕрлĕ шухăшсем пыра-пыра кĕре пуçларĕç.

Акӑ халъ вӑл ҫӗрӗ, суранӗ анҫах пӑртак ыратать. Акӑ хӗрӳллӗ тапакан ҫӗри тӑрукках тапма ҫаранӗ; хура кусӗсене хулӑн куҫ харшийӗсем хупласа хурӗҫ, тутисем пӗр ҫӗре ҫӑмӑртанӗҫ, вӗсем тӑрӑх симӗс пуҫлӑ шӑнасем йулхавӑн ҫӳрӗҫ, вӗсене хӑратма аллисем те хускалмӗҫ, хӑлхисем те илтми пулӗҫ. Унтан?!. Унтан ҫилӗллӗ саниттарсем унӑн пӑр пек сивӗннӗ ӳтне наҫилкке ҫине хурӗҫ те таҫта йатса тухса кайса пӑрахӗҫ. Никам та уншӑн куҫҫӳл тӑкса йӗрекен пулмӗ. Сивӗ хӗл кунӗсем иртсе кайӗҫ, илемлӗ ҫуркунне ҫитӗ: вӑл пуснӑ вырӑнсене сарӑ ҫеҫексем шӑтса тухӗҫ. Вӑрмансенҫе куккуксем авӑтӗҫ, саркайӑксем йурлӗҫ. Вӑл вӗсен сассине илтеймӗ. Пӗҫҫен выртӗ, никам та ӑна асӑнмӗ. Апшӗ анҫах вилмен пулсан—пӗр ывӑл пурҫҫӗ те, салтакран таврӑнмарӗ, тесе аллисене сулӗ. Саниттарсем унӑн ӳтне илсе тухса пӑрахсан, койкки пушӑ тӑрса йулӗ. Унта урӑх

салтак выртӗ—вӑл та ҫапла сивӗнӗ. Унтан тата... Унтан тата... Ҫулталӑк хушши—виҫҫӗр утмӑл пилӗк кун, кашни кун пӗр салтак. Ласаретра пин койккӑ... Ҫулталӑкра виҫҫӗр утмӑл пилӗк пин салтак сивӗнӗҫ... Пурте ҫамрӑк вӑй питти ҫынсем. Тӗнҫере миҫе ласарет!.. Кашни ҫул мӗн ҫухлӗ ҫын... Йе вӑрҫӑ тата пӗр ҫул, ик ҫул, виҫ ҫул... тӑсӑлсан... Ҫут тӗнҫере кам йулӗ? Кам ҫӗр-кӑмрӑкӗ кӑларӗ? Кам тырӑ акӗ?.. Хӗрарӑмсем анҫах тӑрса йулӗҫ. Арҫынсемсӗр пуҫне мӗнле-ха вӗсем аҫапӑҫа ҫуратӗҫ?.. Апла тата пӗр аллӑ ҫултан тӗнҫере пӗр ҫын та йулмӗ. Апла тӑк мӗншӗн-ха ку вӑрҫӑ кирлӗ!.. Ҫук, ҫук! Капла йурамаст. Йепле те пулсан вӑрҫа ҫарас пулат. Хӑҫан?.. Мӗнле майпа ҫармалла... тесе шухӑшласа, пӗр айаккинҫен тепӗр айаккинелле ҫаврӑнса выртрӗ те, урайӗнҫе выртакан кӑвакарнӑ сӑмсана санитарсем наҫилкке ҫине хурса йӑтса тухса кайнине пӑхса йулҫӗ.

Ласаретра електритсă лампписем çултăлсан, майпен утса çестра пыҫĕ.

— Çывăратăн-им? тесе хуллен ҫĕнҫĕ вăл.

— Çук, пăхса çеç выртатăп, терĕ Карнейĕв утийалне пуçĕ çинҫен сирсе.

— Çывăрмасан мĕнпĕн пуçна утийалпа витрĕн?

— Хăрушă, çестра!

— Мĕнтен хăрушă?

— Нумай вилеççĕ.

— Нумай вилеççĕ? Фронтра кунтинҫен те нумайтарах вилеççĕ пуҫ те, çапах хăрушă мар-тăр?..

— Вилеççĕ те, унта кунти пек мар.

— Мĕнле? урăхла вилĕмпе вилеççим?—тесе йуптарса ыйтрĕ.

— Тăрук.

— Ну, акă мана суранларĕç; астăватăп, айакран патакпа çапнă пек ыратса кайрĕ. Унтан çĕре ӳкрĕм. Кайран вара мĕн пулнине нимĕн те пĕлместĕп...

— Ку аван. Сана, вилмелле лекмен куран. Акă ҫас вăрçă ҫарăнĕ. Вара килне таврăнса авланăн. Халҫхи вăхăтсем майпен манăҫа кайĕç. Вара ҫамрăк арăмупа пурăнăр. Анҫах фронтра, ласаретра йулнисем нихçан та таврăнаймĕç. Хĕл иртсе кайĕ, ăшă çуркунне çитĕ, вĕсем ăна кураймĕç, терĕ çестра. Хăй Карнейĕв куçĕсенҫен пăхса, пуçне лашт ҫикрĕ.

— „Вăрçă пĕтĕ“ тетĕн есĕ, çестра. Мĕнле пĕттĕр-ха вăл? терĕ Карнейĕв. Хăйĕн тĕсĕ пĕрре хуралса кайрĕ те: „Вăрçă пĕтсен ман каллех рутнике таврăнса пармăшăн ĕçлемелле. Таврăнмасăр, кунта ăçта та пулсан йулсан? Мĕн пулĕ-ши. Шыраса тупса тĕрмене лартмĕç-ши?“ тесе хăй ăшĕнҫе шухăшларĕ.

— Мĕн? Мĕн пулҫĕ сана! Сурану пит ыратать-им? Ывăнтăн пулҫ? Лăпланса вырт-ха, епĕ кайам, терĕ çестра. Утийалне тӳрлетсе витрĕ те, ута пуçларĕ.

— Ҫестра! Ан кай. Мана санпа калаҫсан ҫӑмӑлтарах, терӗ Карнейӗв, куҫӗсем шывланса, куҫҫӳлӗ тухнӑ ҫӗртен аран тытса ҭарҭӗ.

Ҫестра ун ҫинелле ҫаврӑнса пӑхса:

— Йе, лӑпланса вырт-ха. Кайран калаҫӑпӑр, терӗ те, хӑвӑрт утса тухса кайрӗ.

— Ав, йепле вӑл, тилӗ пек йӑпӑлтатса, суранлӑ ҫынна пӗтӗмпех хускатса хӑварҭӗ. Салтаксемпе пӑркалама йуратаҭ, шелмӑ... Пӗтӗм ласаретра та ҫав анҭах. Калаҫма, йӑпӑлтатма ӑна хуш... Пултармалла хӗрарӑм. Ыттисем пурте ҫӗленсем пек йавкаланса ҭашкӑрса ҫеҫ ҫӳреҫҫӗ. Пирӗнпе калаҫма мар, куҫ хӳрисемпе те ҫаврӑнса пӑхасшӑн мар. Курӑнсах тӑраҭ — пурте пуршуй ҭӗпписем. У-у... пракљаттисем... Ирӗк пулсан хам аллӑмсемпе пурне те луҭӑркаса тӑкӑттӑм. Хӑҫан ҫитӗ вӑл вӑхӑт! тесе, йулашки сӑмахне тӑсарах каларӗ; кӗтесри койккӑ ҫинҭе

выртакан сарă сухаллă, хăрах ури татăк салтак.

Карнейĕв татăк ура çине хулпуç-çиййĕ урлă çавăрăнса пăхрĕ те:

— Мĕн кирлĕ маршăн ҫĕлхўне пăтратса выртан? Вăл хускатмарĕ мана. Епĕ хам хускалтăм терĕ, çиле-нерех.

— Ха-ха-ха!.. Ху хускалмасăр, саншăн кам хускалтăр?—ха-ха-ха...

Тăрăхласа кулҫĕ унтан тепĕр хĕр-лĕ сухал.

— Çерйаксем-ха есир. Нимĕн те пĕлместĕр мĕншĕнне?! тесе çиленсе кăшкăрса пăрахрĕ вĕсене Карнейĕв. Унтан пуçне утийалпа витсе, лăп-ланса выртрĕ.

Кайран ҫылайҫҫен сухалсем шăлĕ-сене йерсе кулҫĕç унтан. Карнейĕв вĕсене хирĕç нимĕн те ҫĕнмерĕ, итлесе анҫах выртрĕ. Кулни майпен лăпланнăçем лăпланҫĕ. Вара урăх сасăсем шăнасем сĕрленĕ майпа, хус-калса кайрĕç:

— Ай!

— Ой!
— Йывăр мана.
— Ђасрах вилесђĕ.
— Ан ахăр!
— Мĕн сĕлекĕне йухтаран!
— Килте хăйма çийесси мар-им кунта?
— Ăçта улăхан!
— Кай кунтан!
— Çавсем пирки.
— Свлолăђсем!
— Хăçан ђарăнĕ ку вăрçă?! тесе йăнăшни кĕвĕлемен купăс пек ђĕтресе тăрађђĕ. Пăртак выртсан лалмпăсем сÿнђĕç. Вара Карнейĕв та çывăрса кайрĕ.

Ирхине, хĕвел тухиђђенех ăйхинђен вăранса каллех çав йăнăшнă сасăсене илтрĕ. Анђах пайан ăна аплах хăрушă мар, мĕншĕн тесен унăн хăлхисем вĕренсе çите пуçланă ĕнтĕ. Пăртак выртсан çестра пыђĕ. Карнейĕв ун сăмахĕсене йуратса итлесе выртрĕ. Унтан вăл хăйĕн пурнăçĕ çинђен каласа пађĕ. Çестра ăна ун-

шăн пĕртте айăпламарĕ. Анҫах малалла апла пулма хушмарĕ. Татах та каласса лараҫҫĕ пуль те, тухтăр пырсан палаттăран палатта пăхса ҫӳреме кайрĕҫ...

Ҫапла Карнейĕвăн суранĕ ик-виҫ ерне хушшинҫе тӳрленсе те ҫите пуҫларĕ. Кашни кун ҫестра пырса каласса лараҫҫĕ унпа. Вăл ăна ҫав тери йурата пуҫларĕ. Анҫах хăй йуратнине нимĕнле сăмах тупса хăйса калаймасть.

Пĕрре ҫапла, пуҫне тĕрлĕ шухăшсем пыра-пыра кĕнипе, ҫĕрĕпе ҫывăраймасăр пĕр айакки ҫинҫен тепĕр айакки ҫинелле ҫаврăнкаласа выртрĕ. Шурăмпуҫ килес умĕн тин кăшт кăтăш пулнă та, тĕрлĕ тĕлĕксем курса пĕтнĕ. Хĕвелĕн пĕр кĕтесси ҫĕр хушшинҫен хĕсĕнсе тухса, ҫӳреҫе витĕр пиҫĕ ҫине ҫутă ӳксен, каллех вăранса кайрĕ те; ҫестра хăй патнелле хуллен пусса утса пынине курсан, йури ҫывăрам пек пулса, куҫĕсене хупса выртрĕ.

— Çывăратним? тесе, аҫашласа ҫӗнҫӗ вăл.

— Çук, ахаҫ çеç куçа хупса выртап, терӗ Карнейӗв, унтан пуçне çӗклесе, кăшт кулса илҫӗ. Çестра пайан уншăн ӗлӗкхинҫен темиçе хут илемлӗ курăнҫӗ: пит çăмартийӗсем— икӗ писнӗ панулмисем пек çунса, кăвак куçӗсем—сивӗ касхи çăлтăрсем пек выҫаса, çӳхе тутисем савăнăçлă кулкаласа тăраççӗ. Карнейӗв тӳссе выртаймарӗ, аллисенҫен тытса, хăйӗн вӗри кăкăрӗ çумне хӗстерсе хуҫӗ.

— Ах, йар-ха алăсене! Суранна ыраттарăн—тесе, хăйӗн ҫăмăр кăкăрӗсемпе унăн пуçӗ çине тайанҫӗ.

Карнейӗв, çав тери савăннипе, çестра мӗн каланине те илтмерӗ. Аллисене тата хытăрах хӗстерсе:

— Çе-çес-тра, йу-йур-ататăп еп сана тесе, сассине ҫӗтретсе каларӗ.

Çестра пуçӗ çине кăкăрӗсене хытăрах çыпăçтарса:

— Йурĕ. Кайран. Калама анҫах килтĕм эп. Пирĕн пайан темонстратси пулаҫ; ман унта каймалла, тесе хуллен килĕштерсе каларĕ вăл.

Унтан Карнейĕв аллисене хăвăрт вĕҫерсе йарса, пĕтĕм хевтипе ҫĕтресе:

— Мĕнле темонстратси пулаҫ?

— Вăрҫа хирĕҫ!

— Камсем пулаҫҫĕ унта?

— Пĕтĕм хулари ĕҫлекенсемпе салтаксем.

— Апла мана та хăвпа пĕрле ил!

— Ҫук, ҫук. Сана тухса ҫӳреме йурамасҫ-ха, сурану тӳрленсе ҫитеймен. Курассу килсен ҫӳреҫерен пăх. Анҫах сыхлан, суранна ан ыраттар... Ҫипер йул-ха,—тесе сылтăм аллинҫен тытса, сулахай аллипе утийалне тӳрлетсе витнĕ майпа, хăвăрт пĕшкĕнсе сылтăм питҫăмартинҫен ҫуптурĕ. Унта пăртак куҫĕсенҫен пăхса тăрсан, тепĕр хут „ҫипер йул“—терĕ, те хăвăрт тухса кайрĕ.

Карнейёв çав тери хĕпĕртенипе, çестра хăш алăкран тухса кайнине те курса йулаймарĕ. Пăртак выртсан тин:

— Çестра ăçта кайрĕ?—тесе, хăйпе йунашар койккă çинҫе выртакан çара йанахлă салтакран ыйтрĕ. Леш хирĕç нимĕн те ҫĕнмерĕ; аллисемпе çапкаланса, хăмăр куçĕсене тавăрса пăрахса, çăварĕнҫен кăпăк кăлара пуçларĕ. Ана çавăнтах, санитарсем ҫупса пырса, наçилкке çине çĕклесе вырттарҫĕç те васкаса йатса тухса кайрĕç.

„Каллех пĕри сивĕнҫĕ“ тесе шухăшларĕ Карнейёв.

---

Вăл кун — нарăсăн вуниккĕмĕш ҫислиҫҫĕ. Ласарет ҫўреҫисен умĕнҫи йăмрасем çинҫе имĕ-симĕ çук çерçисем: ҫилк-ҫилк... ҫĕвĕлтетсе, хĕвел ăшшинҫе лараҫҫĕç.

Сасартăк:

Тр-р-р-рррр... парапан сасси йанраса кайрĕ. Ласаретри салтаксем

пурте ҫўреҫесенҫен урамалла пăхса илҫĕҫ.

— Мĕн?

— Мĕн пулҫĕ?

— Ҫĕнĕрен вăрҫă хускалаĭ-шим?

— Ан тĕллен.

— Малтан хускалнине пĕтермелле-ха, тесе пĕр-пĕринпе калаҫма пуҫларĕҫ.

Унтан:

„Тăрсам, ылхан клеми ҫапнă,
Выҫăпа ҫурасен тĕнҫи?
Вĕрет пирĕн ăс, тўсеймест вăл
Йарасшăн вилĕмлĕ вăрҫа.

Пусмăр тĕнҫине йăлт ватăпăр,
Тĕпĕ-йĕрĕпе, унтан
Ҫĕнĕ тĕнҫе тăвăпăр:
Ним маррин пурте пулĕ.
Ҫакă пирĕн йулашки, татăклă ҫапăҫу,
Интернаттионалпа етем йăхĕ ҫĕрĕлĕ..

тесе йурлани — хытăран-хытă илтĕне пуҫларĕ.

Карнейĕв тўссе выртамайрĕ, тăрса, ҫўреҫерен пырса пăхрĕ. Урамра туллийех халăхҫĕ. Нумайĕшĕн алли-

сенҫе хĕрлĕ йалав вĕлкĕшеҫҫĕ. Пурте харăс, ҫăварĕсене карса пăрахса:

— Толой патша!

— Толой йунлă вăрçă!

— Ур-рррааа!..

— Ур-рррааа!.. кăшкăрса, малалла йурласа утаҫҫĕç.

— Йулташсем! Револҙутси хускалнă! Епир мĕн пăхса тăратпăр! тесе, койкки çинҫен сиксе анҫĕ татăк уралла салтак.

— Револҙутси! ур-рраaa!

— Толой патша!

— Толой вăрçă!—тесе кăшкăраша пуçларĕç суранлă салтаксем.

— Йлташсем! Манăн арăмран пасылккăпа пĕрле килнĕ хĕрлĕ тутăр пур. Епир те йалав тăвар, тесе ҫуп-кала пуçларĕ хĕрлĕ сухал. Унтан таçтан пĕр патак тупса пыҫĕç: хĕрлĕ тутăра çав патак çумне çыхса хуҫĕç те, урасăр салтак йалава аллине тытса, койкки çине улăхса таҫĕ те, хулăн сасăпа:

— Йулташсем, ан шавлăр-ха. Епĕ сире револютси çинҫен пĕр-ик сăмах каласа парам.

Пурте ун кусĕнҫен пăхса шăп пулҫĕç.

— Ак, куратăр-и мана!—тесе, татăк урин йĕмпĕççине тытса кăтартрĕ. Епĕ салтака икĕ урапа килтĕм. Халĕ—хăрах ура вĕçне йултăм. Кам айăплă куншăн? Вăрçă! Патша вăрçи пулмасан, манăн урасем иккĕш те тĕрĕс пулнă пулĕҫҫĕç. Çавăнпа пирĕн револютси тумалла... тата тем каласшăн çăварне карнăҫҫĕ, анҫах ăна пўлсе:

— Тумалла!

— Тумалла!

— Ур-ррраааа!.. кăшкăрса йаҫĕç.

Карнейĕв ҫўреҫе умĕнҫе, пĕр ҫĕнмесĕр пĕрре урамри, пĕрре ласаретри темонстратси тăвакансем çине тĕлĕнсе пăхса тăҫĕ.

— Вăрçă кирлĕ мар ĕнтĕ, вăл тăрантрĕ. Анҫах патшасăр мĕнле пурăнмалла? Кĕтў кĕтўçĕсĕр пулни

пур-и халиҫҫен? тесе, ҫăварне карса йарса, кăшкăрҫӗ кӗреҫе сухаллă салтак.

— Турă хушнă вăрҫа мӗнле хирӗҫ пымалла? Пăрахăр, аҫасем. Турă илтсен тем кăтартӗ? тесе, еăхсăхса каларӗ, йалан хӗрес ҫакса ҫӳрекен, типшӗм, хура салтак.

— Вăрҫă тура хушнă тăрăх пулма пултараймасӗ! Ана патшасем, унăн йыттисем тăваҫҫӗ, терӗ татăк алăлă ҫара йанах.

Ҫав вăхăтра куҫӗсем алҫăранă тухтăр хашкаса пырса кӗҫӗ те:

— Саланăр!.. Прахвосеем, мӗн пуҫтарăнса тăратăр! тесе, ҫăварӗнҫи сурҫăкӗсене пӗрӗхтерсе кăшкăрҫӗ.

— Ху салан! вилӗм памушникӗ! тесе пурте, хар! кăшкăрса йаҫӗҫ. Тухтăр пӗрре хуралса кайрӗ те, кутăнкутăн ҫакса тухса вӗҫтерҫӗ.

— Ха-ха-ха!.. ахăлтатса кулса йулҫӗҫ унран.

Хӗвел кăнтăрла тӗлнелле ҫитсен урамри халăхсем майӗпен салана

пуçларĕç. Унтан ласаретри салтаксем те койккисем çине тăсăла-тăсăла выртрĕç.

Карнейĕв вăрахҫен ҫўреҫерен пăхса, çестра килессе кĕтсе тăҫĕ. Хĕвел те каçалла май сулăнҫĕ. Йăмрасем çинҫе ларакан çерçисем те мăшăрлăн вĕççе кайса саланса пĕтрĕç. Çук! Çестрана кĕтсе илеймерĕ. Вара хуллен утса пырса, койкки çине ларсан: „Урăх кураймăп-шим ĕнтĕ епĕ ăна?“ тесе шухăшласа утийалĕ айне кĕрсе выртрĕ.

## IV.

Патшана вырăнтан кăларни ерне, уйăх, ик уйăх, виç уйăх та ытла иртрĕ. Çук, вăрçă ҫарăна пĕлмест. Ҫарăнмалли майĕ те çук: куллен-кун роҫĕ-роҫĕпе, полккипе, тивиçи-тивиçипе салтаксене фронта ăсатаççĕ. Фронтран вуншарăн, çĕршерĕн, пиншерĕн суранланнă салтаксене ласарета турттара-турттара килеççĕ. Ла-

саретра çавах—ыв̆анн̆а т̆есл̆е, çил̆елл̆е саниттарсем п̆ер ҫаран̆масăр кус̆е-сем хуп̆анса та çитеймен салтаксене наçилккесем çине хурса йăта-йăта тухса кайаçç̆е; в̆есем утн̆а майпа сим̆ес пуçл̆а хура ш̆анасем хурт пек с̆ерлесе йулаçç̆е.

Карнейёв, т̆урленсе çите пуçлан̆а суран̆е, в̆арах салатса çыхманнипе, ç̆ен̆ерен арасланса кайса, вилесрен ҫуй йулҫ̆е. Ласаретран çиҫ̆е уйăх тулса сак̆арм̆еш çине кайсан тин к̆аларҫ̆еç. Ласаретран тухн̆а ҫух ăна, п̆ер уйăха килне кайса пур̆анма отпуск паҫ̆еç.

Ласаретран тухсан Карнейёв ун-талла-кунталла п̆ахкаласа:

— „Áçта кайас? Рутнике тав̆а-р̆ансан, канас выр̆анне пар̆амш̆ан ёçлемелле! Тата выртса-т̆амалли вы-р̆ан та çук... Ех, пурн̆аç!.. Пур̆е-п̆ер п̆ерре вилмелле... Кайас каллех фрон-та“, тесе шух̆ашлар̆е те, хула урам̆е т̆ар̆ах, пуçне ç̆ерелле ҫиксе, х̆ай

ăçталла канине пĕлмесĕр, вăрăммăн йарса пусса ута пуçларĕ.

Тискер çанталăк. Кĕрхи сивĕ çил вĕрет; татăлса ӳкес пек хура çăмăр пĕлĕҫĕсене таçта хăйаматалла хăвалаŧ.

Карнейĕв çӳлĕ çуртсен хушшисенҫен пуçне çĕрелле ҫиксе, ниçталла та пăхкаламасăр утса пынă майпа сасартăк:

— Ваӊкка!.. тесе йантараса кайрĕ пĕр хулăн сасă. Вăл тăп ҫарăнса, пуçне çĕклесе пăхрĕ те, умĕнҫе сăран пиншаклă çын тăнине курсан:

— А!.. Кам пултăн-ха ес? Еп паллаймарăм сана, терĕ Карнейĕв.

— Ха-ха-ха?.. Паллаймарăн пуљ çав. Виç çул хушши сахал вăхăт мар. Çынпăн тĕсĕ улăшăнма пултараŧ. Епĕ те сана уттунтан çеç палларăм. Астăватăн-и!.. Салтака кайнă ҫух саншăн алă пуснине? терĕ сăран пиншаклă çын.

— Е-е-е..... Ҫурккин есӗ, вӗт! Аван-и, йулташ!—тесе савӑннипе ыталаса ҫуптурӗ.

— Йе, каласа пар, ӑҫта, мӗнле пурӑнан? ыйтрӗ Ҫурккин.

— Пурнӑҫ ҫинҫен ан ыйт та, аҫа... Пайан епӗ ласаретран тухрӑм. Пӗр уйӑха киле кайса пурӑнма отпуск паҫӗҫ. Шухашларӑм-шухашларӑм та.. Ниҫта кайма та вырӑн ҫук! Рутнике таврӑнсан унта хута пӗлен... Ҫавӑнпа каллех фронта кайма шухӑш тытрӑм. Ан тив, пурӗ пӗр пӗрре вилмелле... тесе пуҫне лашт ҫӗрелле ҫикрӗ Карнейӗв.

— Фронта?... Мӗн калаҫан? Пайан-ыран вӑрҫӑ пӗтес пек, фротри салтаксем вӑрҫасшӑн мар, полккипе полкипе, тивиҫи-тивиҫипе окопӗсене хӑварса хӑшӗ ӑҫта пӗлет—ҫавӑнта саланаҫҫӗ. Вӑхӑтлӑх правиттӗлсвӑ йулашки кунӗсене пурӑнат.Есӗ фронта кайасшӑн... Пӑрах вӑл шухӑша! Аҫа хампа пӗрле, терӗ ӑна Ҫурккин.

— Ӑҫта?..

— Епӗ Револ̧утсилӗ штапра ӗҫлетӗп. Пайан-ыран Вӑхӑтлӑх правиттӗлствӑ аллинҫен влаҫа туртса илме хатӗрленетпӗр. Есӗ рапоҫҫи вӗт, пире нумай пулӑшма пултаран. Вӑхӑтлӑх правиттӗлства сирпӗтсе, влаҫа хамӑр алла илсен; вара вӑрҫӑ ҫарӑнсан, калла рутнике тавӑранма та пултаратпӑр. Епӗ сана суйса калас ҫук, ху та пӗлен мана... унталла-кунталла пӑхса каларӗ Ҫурккин.

Карнейӗв ун сӑмахӗсемпе пӗтӗмпех килӗшрӗ. Унтан иккӗшӗ калаҫса, пӗр тӑвӑр урампа сӑрталла улӑхса кайрӗҫ.

Пырсан-пырсан пӗр ҫӳлӗ мар ҫул ҫурта кӗрсе кайрӗҫ. Унта пысӑк пӳлӗмре туллийех салтаксем лараҫҫӗҫ. Вӗсен хушшинҫе—пӗр карттус тӑхӑннӑ хӗрарӑм, хытӑ кӑшкӑрса ҫыру вуласа лараҫҫӗ. Вӗсем пӳлӗме кӗрсен, вулама ҫарӑнса:

— Ну, мӗнле Ҫурккин йулташ, хатӗр-и? терӗ хӗрарӑм.

— Хатĕр. Каçпа ултă сехетре хускалаççĕ,—терĕ Ђурккин.

— Ак, Карнейĕв та кунта! Есĕ те пирĕнпе-и!!! тесе ури çине сиксе тăђĕ хĕрарăм.

Карнейĕв пĕр минута, нимĕн ăнланса илеймесĕр, тĕлĕнсе: „Мĕнле хĕрарăм ку мана паллаканскер“ тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнђе.

— Йулташ Паттапăва, есир Карнейĕв йулташа паллатăр-им? тесе ыйтрĕ унтан Ђурккин.

— Пăртак çеç... терĕ хуллен хĕрарăм.

— Вăл—манăн йулташ пулаť. Рапођђи—шахťор. Епир унпа пĕр рутникре, пĕр шахтăра ĕçленĕ. Салтака та пĕрле, хамăр ирĕкпе çырăнса кайрăмăр. Ун ђухне епир нимĕн те пĕлмен... Халĕ вăл пире пулăшма килђĕ, терĕ Ђурккин.

Унтан пуçĕнђи карттусне хывса сĕтел çине хурсан:

— Йулташсем, пирĕн полкка тепĕр пољшевик хутшăнђĕ,—терĕ хĕрарăм.

Карнейёв тин палларӗ. Вӑл хӗрарӑм—ласаретри ҫестра пулса тӑҫӗ. Савӑннине нимӗн тӑваймасӑр, урисемпе пӗр вырӑнта пускаласа тӑҫӗ.

— Итлӗр, ак мӗн ҫырат̆ Ленин йулташ, терӗ. Унтан каллех вула пуҫларӗ. — „Рапоҫҫисем, салтаксем, матроссем пурте пирӗн—польшевиксем майлӑ. Малашне кӗтсе тӑмалли ҫук. Пайанах Вӑхӑтлӑх правиттӗлства сирпӗтсе, власа рапоҫҫисен аллине памалла. Пайантан йулсан, револютси тата пӗр вӑхӑта тытӑнса тӑма пултарат̆“ тесе вуласан, ларакан салтаксем пурте ура ҫине сике-сике тӑҫӗҫ.

— Ну, йулташсем, вӑхӑт ҫитрӗ. Камӑн ӑҫта каймалла, саланӑр. Ҫи малтан Ҫимни творетса, поҫта, стантсисене ҫавӑрса илӗр. Кам мӗн тытса илет, штапа телефон тӑрӑх пӗлтерӗр, — терӗ сӗтел хушшинҫе ларакан хура сухаллӑ салтак.

Унтан пурте пӗр-пӗрине алӑ тытса пӗрерӗн, икшерӗн тухса кайса пӗтрӗҫ. Пўлӗмре Ҫурккин, Карнейёв,

хĕрарăм, тата хура сухаллă салтак анҫах тăрса йулҫĕç.

— Ну, йулташсем, пайан татăклă револуси пулать. Халиҫҫен епир Ленин йулташ çырăвĕсем тăрăх ĕçлесе пытăмăр. Ыран епир ăна хамăр куçпа курса, унăн çулăмлă самахĕсене хамăр хăлхасемпе итлĕпĕр, савăнса каларĕ хура сухаллă салтак.

— Пирĕн Карнейĕв йулташпа ăçта кайас, тесе ыйтрĕ унтан Ҫурккин.

— Есир çимни творетс умне пуçтарăнакан рапоҫҫисемпе камантăвăт тăвăр, терĕ вăл. Унтан:

— Çинă, сан кайса аҫасене астуса килесҫĕ,—терĕ хĕрарăм çинелле пăхса.

Карнейĕв çавăнтах ăнласа илҫĕ. Вăл хĕрарăм сухаллă салтакăн арăмĕ иккенне.

Унтан вĕсем Ҫурккинпа иккĕшĕ тухса кайрĕç.

* *
*

Çĕрĕпе çывăрмасăр йунккĕрсемпе кĕрешрĕç. Çутăлнă çĕре пĕтĕм Пи-

тӗр хули рапоҫҫисемпе салтаксен аллине кӳҫрӗ.

Ирхине хӗвел вут тӗслӗ йӑлтӑртатса ҫунса тухрӗ. Пысӑк ҫуртсен, хапрӑк-савӑтсен тӑррисенҫе хӗрлӗ йалавсем вӗлкӗшсе тӑраҫҫӗҫ. Урамсем тулли—рапоҫҫисем, салтаксем, матроссем, хӗрарӑмсем, тата аҫа-пӑҫасем пурте пӗр йенелле утса:

„Турӑ та, патша та, керой та,
Никам та пире ҫӑлас ҫук.
Ҫӑлӑнас тесен ҫӑлӑнпӑр
Хамӑр алӑпа анҫах.
Пӗлсе тӑшмансене ҫирпӗтмешкӗн,
Тивӗҫлине илмешкӗн,
Вӗртерӗр вуҫаха, хӑйуллан шаккӑр.
Тимӗрӗ хӗрсе ҫитнӗ ҫух . . . . . . . . .
. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . .
Тӗнҫери ӗҫӗн аслӑ ҫарӗ—
Ӗҫлекенсем—епир анҫах,
Ҫӗре тытма тивӗҫ пур пирӗн,
Харам пырсене—нихҫан та.
Йыт кӗтӳ пек палаҫсемшӗн
Хайар аслати авӑтсан,
Ҫапах пире хӗвел ҫутатӗ
Хӑйӗн пӗтми ҫутипе.

Ҫакӑ пирӗн йулашки, татӑклӑ ҫапӑҫу.
Интернатсионалпа етем йӑхӗ ҫӗрӗлӗ...

тесе йурланипе ур-ррр-аааа! кăшкăрни пĕтĕм Питĕр хулине йанратса тăраҫҫĕ.

Ҫав кун Карнейĕв кам унăн тăшманĕ, кам унăн йулташĕ иккенне пĕтĕмпе пĕлҫĕ. Ҫавăнтан вара вăл ҫăн-ҫăн полђшевик пулҫĕ.

Ҫав пĕтĕм тĕнҫере паллă, ҫапла кунсем пулса иртни, ҫылай вăхăт иртрĕ.

Карнейĕв пайан ҫак ҫулсем хушшинҫе мĕн-мĕн тунă, тата малалла мĕн тумалли ҫинҫен ыран шахтŏрсене каласа пама хатĕрленет, ҫавăнпа вăл шурă хут ҫине хĕрлĕ кăранташпа васкаса ҫыраť.

Ҫĕклекен машшинă пĕр ҫарăнмасăр ĕҫлет; шахтăран тулли ваконеткăсене ҫŭлелле ҫĕклесе кăлараť; откаҫҫăксем васкаса тĕртсе кайса отвал ҫине йăвантара-йăвантара йараҫҫĕ. Ҫтени ҫумĕнҫи сехет ывăнма пĕлмесĕр ҫик-ҫик... шаккаť.

---

# ПАТРАК

## I.

Кавăрлене тем пулђĕ?.. Хуçи патĕнђен пăрахса таварăннăранпа пĕтĕмпех пăсăлђĕ: кашни каç тенĕ пекех таçта кайа-кайа çухалаť; хăш каç çурçĕрте, хăш каç çутăлас умĕн тин килнө таварăнса выртаť. Амăшĕн сăмахне итлеми пулса çитрĕ. Малтанах амăшĕ те ђĕнместђĕ; кайран-кайран йаталаçкалама та пуçларĕ. Кавăрле, амăшĕ йатлаçа пуçласан, куç харшийĕсене хурлăхлă çĕклесе, икĕ кăвак шăрçа пек куçĕсене выљантарса, çӳхе, тăп-тăп тутисене йăл култараť те:

— Йе, çитĕ ĕнтĕ, анне. Пĕр сăмаха темиçе хут каламаççĕ... Илтнĕ, вĕт, пĕрре мар, темиçе хут та,— тесе хураť.

— Илтессе илтнĕ те, пит ҫ̌ас манатăн, аҫ̌ам. Аçу та, ман сăмаха итлемесĕр кайса, хăй пуçне хăй çирĕ,— тет амăшĕ тарăхса çитнипе...

Ак, Кавăрле кĕçĕр çурçĕр иртсе çутăлас майа кайсан тин килне таврăнҫ̌ĕ. Пӳрте кĕриҫ̌ҫ̌енех амăшĕ йаталаçасса сисрĕ. Ҫ̌ăнах та, алăкран кĕнĕ-кĕменех, амăшĕ кăмака умĕнҫ̌ен:

— Ех, аҫ̌ам!.. Хуçу патĕнҫ̌ен ĕçлесрен хăраса, пăрахса таврăнтăн та, çурçĕр кайăкĕ пек çĕрĕ-çĕрĕпе ҫ̌упан. Çапла çав вăл ĕçлесси йăвăр. Çĕрĕ-çĕрĕпе урам тăрăх йытăсене вĕртсе çӳресси мар... Аçу пулсан капла пулмăттăн та, ҫ̌аракан çук сана. Ху хуçа, ху турă,— тесе куççӳлне йухтарсах, йаталаçма пикенҫ̌ĕ.

Кавăрле çамрăк-ха: вунсаккăр тултарса, вунтăххăр çине çеç пуснă. Çамрăк пулсан та пуçĕнҫ̌е тĕрлĕ шухăш выҫ̌ат. Ҫ̌ухăн пурнăçне йусама тĕрлĕ май шырат. Кашни каç Çитăр комунис патне çӳре пуçла-

наранпа нумайа вĕренҫĕ ĕнтĕ... Каварле хăй те комуниса ҫыранасшăн— темиҫе хут та ыйтса пăхнă Ҫитăртан. Анҫах: „Тата пăртак вĕрен-ха, вара ҫыранăн“, тесе тытса тăрат Ҫитăр.

Каварлен амăшĕ ăна-кăна пĕлмест, хăйĕн ватă шухăшĕпе, ҫамрăк ывăлĕн ҫĕнĕ шухăшне хирĕҫ пырат: кашни кун тенĕ пекех тарҫа кайса кĕме хăвалат.

Каварле пӳрте кĕрсен, пĕр ҫĕнмесĕр, амăшĕн хуйхăпа типсе, куҫҫӳлпе шывланнă куҫĕсенҫен пăхса, йаталаҫнине итлесе тăрсан-тăрсан, ҫийĕнҫи ҫăваш тăлинҫен ҫĕленĕ хура пиншакне хывса, тăрăх сак ҫине пăрахрĕ те:

— Ех, анне!.. Ватăлнă ҫав ĕнтĕ есĕ. Ҫавăнпа та, хăвăн тахҫан ҫĕрсе, тутăхса пĕтнĕ шухăшусемпе манăн ҫамрăк ҫĕрене хурлантаран. „Ĕҫлесрен хăраса, пăрахса таварăнтăн. Ĕҫлесси йăвăр ҫав вăл“, тетĕн. Епĕ ĕҫрен хăрамастăп. Хăраман та, хăрас ҫа ҫук!

Анҫах камшăн?... Мĕншĕн ĕҫленине пĕлес пулаҭ(?)... Пуйан патĕнҫе вилиҫҫен ĕҫлесен те—маншăн усси пулас ҫук! Астăватăн-и!... Аттене ҫехсем тытса вĕлерсен епĕ тăхăр ҫулхи аҫа тăрса йултăм. Ҫав ҫулах есĕ мана пуйан патне тарҫа тытса патăн. Ҫиҫĕ ҫул пĕр хуҫа патĕнҫе, пĕр тухмасăр ĕҫлерĕм. Мĕн ĕҫлесе илтĕм! Мĕн пур ĕнтĕ пирĕн? Кӳлме лаша, сума ĕне... ҫăхă ҫук вĕт!... Есĕ каллех тарҫа кĕрсе ĕҫлеме хăвалан... Ĕҫле. Ĕҫ ухамсене йуратаҭ, тесе ахаљ каламан ҫав авалхи ваттисем,—терĕ амăшĕ ҫине пăртак ҫиленсе. Унтан тĕпелелле иртсе, шăшикуҫ лампине ҫутса йарса, кăсйинҫен, лӳҫĕркеннĕ хаҫат кăларса, сĕтел хушшине кĕрсе ларҫĕ те, тутисене мăкăлт-мăкăлт сиктерсе вула пуҫларĕ.

Ҫĕр пит тĕттĕмех мар. Ҫурла пек ҫинҫе уйăх кăшт ҫутатаҭ. Вăрăм урамсем лăпкă сывăраҫҫĕ. Лăпкă ҫĕр. Ҫил те ҫук. Ниҫта, нимĕн сас-ҫӳ

те илтĕнмест. Вăхăт-вăхăтпа усал йытăсем çеç: — хав-хав!. вĕркелесе илеççĕ те, каллех лăпланаççĕ. Ун пек ырă кас уйав вăхăтĕнҫе çеç пулаť вăл.

Кавăрле умĕнҫи шăшикус лампăн вуҫĕ, хĕр йĕнĕ пек тĕрлĕ йеннеле тайкаланса çунаť; хура çĕлен пек йавкаланса, маҫҫаналла хăпарса саланаť. Амăшĕ ушайупи çумне тайанса тăнă та, çаплах хăйĕнне палкаť:

— Пĕртте ан ĕçле, еппин. Ман ĕçĕм çук. Çӯре çĕрĕ-çĕрĕпе услап йытă пек сĕтĕрĕнсе. Аçта йуртса çӯрерĕн-ха кĕçĕр?.. Каллех çав Çитăр патĕнҫе халлап йарса лартăн-и?.. Ырра вĕрентĕ сана Çитăр. Çӯре-ха. Асту...

Кавăрле ҫăтса тăраймарĕ. Хаçатне вулама пăрахса, амăшĕн куçĕсенҫен шăтарас пек пăхса:

— Çитĕ ĕнтĕ, анне, ҫарăн пушаласта?.. Епĕ ниçта та йуртса çӯремен. Хама кирлĕ ĕç тунă. Халĕ са-

на каласан та, есĕ ăнланас çук. Кайран хăвах пĕлĕн, терĕ. Унтан каллех куçĕсене хаçат çинелле тĕллерĕ.

— Çапла çав вăл пĕҫĕккĕ ҫухне çеç анне кирлĕ? Ӳссе çитсен çӳп вырăнне хурсан та йурать... Çийессӳ килет пуљ?... Çи те вырт ĕнтĕ, çутăлать, вĕт. Ыран пуйан Куçма картинҫи навусĕсене тасатма ҫĕнҫĕ. Иртнĕ ернерех çур пăт çăнăх илнĕҫҫĕ, çисе те йартапăр ĕнтĕ. Хаçат вуланипе хырăм тăранмĕ. Илнĕ йапалашăн ĕçлесе татас пулать. Ҫĕннĕ ҫух каймасан тата, кайран кĕтмелле памĕ?... Çилентерес марҫҫĕ, терĕ амăшĕ йăвашшăн, куççӳлне шăлса.

— Вăл çур пăт çăнăхшăн çĕр хут та ĕçлесе татнă ăна, терĕ Кавăрле. Унтан хаçатне ҫăркаса хурса, тăрăх çак çине пиншакне сарса хуҫĕ те, урисене салтмасăрах, çывăрма выртрĕ.

— Апатланмасăрах выртрăн-им? Кăнтăрларан вара хырăму та выçнă пуљ?.. терĕ амăшĕ аҫашласа.

— Çук. Епĕ Çитăр пиҫҫе патĕнҫе çирĕм,—терĕ Кавăрле куçĕсене майпен хупса.

Амăшĕ ушайупи çумĕнҫе ҫылайҫҫөн хăй тĕллĕн калаçса, мăкăртатса тăҫĕ. Кавăрле амăшĕ мăкăртатнине илтсен те, илтменех пулса выртрĕ. Амăшĕ лампине сӳнтерсе: хм-хм!.. ӳсĕрсе кăмака çине кăштăртатса улăхса выртрĕ. Ватăскер пуçне хурса, урисене тирпейлесе хуриҫҫенех хăрăлтатса çывăра пуçларĕ. Çĕрĕпе, темле ырă мар тĕлĕксем курса пĕтрĕ.

...Хĕвел тухас умĕн Кавăрле çӳлти урамалла васкаса пыраť. Таçтан пĕр хура йытă сиксе тухрĕ те, Кавăрлене çыртасшăн, хархашса пыраť. Васкаса урама ҫупса тухрĕ пек те „Кавăрле çыртаť вĕт!!!..“ тесе хайар сассипе кăшкăрса вăранса кайрĕ. Унтан тăрса ларса хăранипе — пĕсмĕлле, турçырлах,—тесе сăхсăхрĕ.

Каçран çывăрман Кавăрле, çутăлас умĕн çав тери хытă çывăрса

кайнӑскер, амӑшӗ ҫухӑрнипе йалт сиксе тӑрса ларҫӗ. Ним тума пӗлмесӗр ҫывӑрнипе тӑмаланнӑ пуҫне, сӳре шӑлӗсем пек хытӑ пӳрнисемпе кӑтӑр-катӑр хыҫса унталла-кунталла пӑхкаласа ларать.

— Ах тур, аҫам. Пӗр хура йытӑ ҫуть урунтан ҫыртса илеҫҫӗ, терӗ амӑшӗ.

— Ӑҫта? Мӗнле хура йытӑ? Йепле кӗнӗ вӑл пӳрте?—тесе ура ҫине йалт сиксе тӑҫӗ Кавӑрле.

— Ҫу-ук... Пӳртре мар, тӗлӗкре куртӑм,—терӗ амӑшӗ тустарса.

Кавӑрле амӑшне хирӗҫ нимӗн те ҫӗнмерӗ. „Ватӑ пуҫупа тӗлӗкӗнте те аташса, хӑраса ҫывӑран,“—тесе шухӑшларӗ те хӑй ӑшӗнҫе, каллех пиншакӗ ҫине йӑванса кайрӗ.

Ҫутӑлҫӗ. Хӗвелӗн пӗр кӗтесси хӗрелсе тухнӑ та, ҫути тӳрех, ҫӳреҫеррен кӗрсе Кавӑрлен пиҫӗ ҫине ӳкет.

Амӑшӗ кӑмака ҫинҫе хӑй тӗллӗн ҫылайҫҫен калаҫса ларсан-ларсан, кӑшӑртатса анса, питне ҫурӗ те:

— Тӑр ӗнтӗ, аҫам. Хӗвел те тухрӗ. Питне-куҫна ҫу. Тата Куҫма ӗҫлеме ҫӗнме килсе ҫитӗ,— тесе Каваӑрлене пырса тӑратрӗ.

Кавӑрле ҫывӑрнипе амӑшӗ касхине каланине мансах кайнӑ:

— Мӗн тума кайас ман Куҫма патне?—тесе тӑрса ларҫӗ.

— Мантӑн та-им? Ҫӗркӗ ҫеҫ каларӑм-ҫке. Куҫма картинҫи павусӗсене тасатма ҫӗнҫӗ тесе.

— Е-е-е-е... Навусӗ пулсан, хӑйех тасаттӑр. Халӗ ӗнтӗ еп унӑн тарҫи мар. Ҫитӗ, ахаљ те ҫиҫӗ ҫул ӗҫлерӗм. Малтан уншӑн тӳлетӗр-ха. Халљ пуйансен ӗҫӗсене ӗҫлесе ҫӳреме вӑхӑт мар. Пирӗн пайан—ҫухӑнсен пухӑвӗ пулаҭ, унта каймалла,— терӗ Кавӑрле. Унтан, амӑшӗ йалан мӑкӑртатса ҫӳренине итлес мар тесе, айӗнҫи пиншакне илсе, пуҫӗ ҫинҫен пӗркенҫӗ те, каллех ҫывӑрма выртрӗ.

— Ҫывӑр еппин, ман ӗҫӗм ҫук...

## II.

Хӗвел хӗрлесе тухсан лӑпкӑ сыварса ҫӗр касна урамсем ӑйхисенҫен вӑранҫӗҫ. Ҫӗрӗпе кашкӑр тытасран хӑраса ларнӑ хур-кӑвакалсем, ҫӗпписене йертсе, шӑкӑлтатса калаҫса, ҫырманалла май ҫӑрхаласа утрӗҫ. Кӗтӳҫӗсем вӑрӑм пушисене пӑшал пенӗ пек шартлаттарса, кӗтӗвӗсене ирӗк уйалла хуса тухса кайрӗҫ. Кӑмака труписенҫен кӑвак тӗтӗм тухса, йал ҫине лупас пек витӗнҫӗ. Пӗтӗм ҫут тӗнҫери ҫӗрҫунсем вӑранса хӑйсен ӗҫӗсене ӗҫлеме тапранҫӗҫ. Ҫӗрлехи тискер кайӑксем анҫах, сын курмалла мар шӑтӑксене кӗре-кӗре выртрӗҫ.

Амӑшӗ пӗрмай мӑкӑртатса, калаҫса ҫӳренипе, Кавӑрле пуҫне пиншакӗпе ҫӑркаса выртнӑ пулсан та, урӑх сывӑраймарӗ. Ӑйхи ҫитмен пулсан та, тӑрса питне ҫурӗ те, амӑшӗ ирхи апат хатӗрлиҫҫен, каллех хаҫат вулама ларҫӗ.

Амăшĕ апат хатĕрлесе, сĕтел çине пырса лартрĕ те:

— Пăрах ĕнтĕ çав хаçатна. Ларса çи. Çĕркĕ те çимесĕрех выртрăн, тĕрĕ. Çав вăхăтра ҫӳреҫерен шак-шак шаккаса:

— Каврăрле, аŀа ҫасрах, ҫухăнсен пухуне! çинçе сассипе кăшкăрҫĕ Çитăр хĕрĕ Праски.

Кавăрле хăвăрт хаçат çинҫен куçне илсе, ҫӳреҫе витĕр Праски çине пăхрĕ те:

— Халех, апатланатăп та, пыратăп. Праски, пӳрте кĕр-ха, санпа пĕр-ик сăмах калаçмалли пурҫҫĕ,— тесе ҫĕнҫĕ. Хăй савăннипе тутисемпе йăл кулса илҫĕ.

— Мĕн каламалли пур вара? Ҫӳреҫерен каласан та йурĕ. Кĕрсе тăрсан, вăрах тăрăп. Ман тата пилĕк-улт килле çитмелле-ха,—терĕ Праски.

— Йăхăрса ĕлкĕрĕн-ха. Кĕр-ха, кĕр!—терĕ Кавăрле кантăк витĕр Праски çамкинҫен пӳрнипе тĕртсе.

Праски йăл кулса:

— Ан вылаҫҫӗ-ха, Кавӑрле... Каҫпа... — тесе алӑк патнелле ҫупса кайрӗ.

Праски пӳрте кӗнӗ ҫӗре, Кавӑрле алӑк патнелле утса пыҫӗ те, аллисенҫен тытса, ҫӳреҫе умне ҫавӑтса пырса, сӗтел ҫинҫен хаҫат илҫӗ те: — Ак вуласа пӑх-ха, мӗн ҫинҫен ҫырнӑ кунта? — тесе шӗвӗр пӳрнипе тӗртсе кӑтартрӗ.

— Мӗн ҫинҫен ҫырнӑ вара?

— Вуласа парам-и?!

— Вула. Есӗ манран авантарах вулатӑн, терӗ Праски, хӑй Кавӑрле хулпуҫҫийӗ ҫине пуҫне хурса, куҫӗсене хаҫат ҫинелле тӗллерӗ.

Ак, пӑхӑр-ха ӗнтӗ! Пӗр хулпуҫҫи ҫинҫе икӗ пуҫ — иккӗшӗ те ҫамрӑк, сарӑ ука пек сарӑ ҫӳслӗскерсем, ҫӗнӗ шухӑшлӑ. Тӑватӑ кӑвак шӑрҫа пек кӑвак куҫӗсем пӗр пӑнҫӑ ҫинелле ӳпӗннӗ.

— Ак, итле, Праски. Епӗ кирлӗ-кирлӗ вырӑнсене ҫеҫ вуласа парӑп —

терӗ. Унтан сӑмахӗсене татса, ӑнланмалла вула пуҫларӗ:

„Пӗрлешӳлӗ хуҫалӑхсене ҫӗр парасси ҫинҫен...

... Пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх патшалӑха та, хресҫенсене те усӑллӑ йапала; ҫавӑнпа та хаљхи вӑхӑтра, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑхсене ҫи малтан, ҫи лайӑх ҫӗрсене, ҫарансене касса памалла... Нумай вырӑнсенҫе (пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх ҫук йалсенҫе) лайӑх ҫӗрсене, ҫарансене ӗлӗкхи куштан-пуйансем хӑйсен аллисенҫе тытса тӑраҫҫӗ-ха. Ҫавӑн пек пӗрешӳллӗ хуҫалӑх ҫук йалсенҫе, мӗнле те пулсан патраксене, ҫухӑнсене тата вӑтам хресҫенсене ӑплантарса парса, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх тума тӑрӑшмалла...

...Пуйансем тытса тӑракан лайӑх ҫӗрсене, ҫарансене, вӗсен аллинҫен туртса илсе, ҫав пӗрешӳллӗ хуҫалӑхсене памалла“...

— Ӑнлантан - и, Праски? терӗ Кавӑрле вулама ҫарӑнса.

— Ăнланмасăр, йепле ăнланмалла мар, çав тери ăнланмалла ђĕлхепе çырнăскере. Пирĕн йалта та, ун пек пуйансем сахалах мар. Ак, илер-ха пуйан Куçманах,— çур йалăн çĕрне çавăрса илнĕ те, акса, çулса усă курса пурăнаť. Епир пур, ђухăнсем, сăмах та ђĕнейместпĕр. Ăçта нађар анасене акса, тункатасем тăррисенђен çулса çӳретпĕр, терĕ Праски Кавăрле хулпуççийĕ çинђен пуçне илсе.

— Пайан ђухăнсен пухăвĕнђе пĕрлешӳллĕ хуçалăх—комун тăватпăр-тăватпăрах ĕнтĕ... Вунă çын халех çырăнаççĕ. Çитĕ ĕнтĕ пуйансен айĕнђе пурăнса. Тĕрĕс мар-и, Праски... тесе çурăмĕнђен лăп-лăп çупăрларĕ Кавăрле савса.

— Ватă çын умĕнђех ан выља ĕнтĕ,— тесе куçĕсене йăл култарђĕ Праски.

— Çу-ук. Еп выљаса мар. Ђăннине калап. Лар пирĕнпе апат çиме,— терĕ Кавăрле, сĕтел хушшине ларса.

— Çук, ман çиĕс килмест. Епир апат тунă ĕнтĕ. Çиĕр есир. Епĕ унџен кĕтсе ларăп, — терĕ Праски сак çине ларса.

Кавăрле, Праски куçĕнџен пăхса йăл кулџĕ те, çиĕ пуçларĕ. Пўрт алăкĕ: џăр-р-р уçăлџĕ те, пуйан Куçма кĕџĕ. Пушă туркĕтессинелле пăхса, пуçĕнџи йĕтĕн çĕлĕкне хывса, хăй çине виçĕ хут хĕрес хывсан „турри те çук“, тесе шухăшларĕ ăшĕнџе. Праскипе Кавăрле пĕр-пĕрин çине пăхса илџĕç. Праски џуĭ ахăлтатса кулса йараџџĕ, Кавăрле пўрнипе йунаса ĕлкĕрџĕ.

— Ирт тĕплелле, Куçма шăллăм. Лар пирĕнпе апат тума, — терĕ Кавăрле амăшĕ.

— Тавтапуç турра. Иртсех тăрас мар. Кавăрле, епĕ ĕнерех аннўне каланăџџĕ: „Çав парăмăршăн укçа тупса париџџен ĕçлесе таттăр“ тесе. Ман унта ĕçĕ те нумай мар... Каçџен те çитес çук, — терĕ Куçма маџџаналла пăхса.

Каварле аллинҫи кашăкне сĕтел ҫине шакăрт тутарса пăрахрĕ те:

— Мĕнле парăмшăн?.. Ҫав ҫур пăт ҫăнăхшăн-и?. Епĕ сан патра ҫиҫĕ ҫул ĕҫлерĕм хырăм хакĕшĕн. Есĕ ăна пĕлетĕн-и!?.. Каллех парăм шыраса ҫӳрен. Сан ĕҫне епĕ ĕҫлесе пĕтерес ҫук. Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи мар. Улталаймăн... терĕ Каварле, Куҫман куҫĕсенҫен, сăмси тăрăх шăтарас пек пăхса.

— Иртнишĕн ан асăн-ха есĕ. Халҫхишĕн пырса ĕҫлесе тат та, вара сăмах та пĕтĕ, терĕ Куҫма йăпăлтатса.

— Пĕрре каланă сана: „Епĕ сана парăмлă мар“ тесе! Ҫур пăт ҫăнăх аннене панă пулсан. Уншăн пĕр хут мар, ҫитмĕл ҫиҫĕ хут та ĕҫлесе татнă. Анне хĕлĕпе кĕнҫеле арларĕ. Уншăн мĕн патăн???... Анлантăн-и! Анланмасан, ну каласа парам. Итле! „Иртнине ан асăн“ тен. Епĕ мар сана парăмлă. Есĕ мана ҫиҫĕ ҫул ĕҫленĕшĕн пĕр пус та тӳлемен?!. Ҫав ҫи-

ђӗ ҫул ӗҫленӗшӗн епӗ сан ҫинђен халӑх сутне патӑм,—терӗ Кавӑрле татса.

Куҫма тӑнӑ ҫӗртех пӗрре шуралса кайрӗ те, урисем тайӑлса кайса, ђуӑ йӑванса кайађђӗ, хаљ те алӑк йанаххи пулђӗ, унтан аллисемпе тытса ӗлкӗрђӗ.

— Мӗн, мӗн пулђӗ, Куҫма шӑллӑм?—тесе сӗтел хушшинђен тухса, Куҫма патне утса пыђӗ Кавӑрле амӑшӗ.

— Ҫу-у-ук. Ман ђирӗ ҫапла. Вӑхӑт-вӑхӑтпа пуҫ ҫавӑрӑнса кайаӑ,—терӗ Куҫма хуллен, хӑрах аллипе ҫамкинђен тытса.

Кавӑрлепе Праски пӗр-пӗрин ҫине пӑхса йӑл кулђӗҫ.

— Йе, аӑа хӑвӑртрах, Кавӑрле. Пуҫтарӑнса ҫитрӗҫ пуљ?.. Кӗтсе тӑрӗҫ тата,—терӗ Праски ури ҫине тӑрса. Унтан Кавӑрле сӗтел хушшинђен тухса пиншакне тӑхӑнђӗ те, алӑк патнелле утрӗ.

— Миçе тенкĕ шыраса патăн вара? Сутлă мĕнлĕ çӳриҫҫен. Ахаљ килĕштерме май çук-и?... Йут сынсем мар вĕт,—терĕ Куçма йăвашшăн йăпăлтатса.

— Миçе тенкĕ иккене сутра пĕлĕн. Каласа парĕç унта,—терĕ Кавăрле тулалла тухса. Ун хыçĕнҫен Праски те тухрĕ. Вĕсем çине Куçма тинкĕрсе пăхса йулҫĕ. „Çак йытă амипе ашшех вĕрентеççĕ ĕнтĕ ăна“, тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнҫе.

— Аван çăварне пĕçертрĕн,—терĕ Праски урама тухсан.

— Ку мĕн-ха. Ак, анисене, çаранĕсене комун ваљљи туртса илсен, çăварĕ пиçĕ-ха ун,—терĕ Кавăрле, Праскипе йунашар утса...

## III.

Куçма ҫылайҫҫен алăк йанаххинҫен аллисемпе тытса тăҫĕ, унтан пуçне çĕклессе: у-ух! тесе тарăн сывласа:

— Тĕлĕнмеллле кăҫухнехи ҫынсемпе?... Выҫăхсан сан патна йăлăнса пыраҫҫĕ. Парсан ĕҫлесе те татасшăн мар. Ҫийĕнҫен тата сан ҫинҫенех сута параҫҫĕ... Ĕлĕкех аванҫҫĕ. Пурте сана хисеплеҫҫĕҫ. Хаљ ĕнтĕ суҫĕ те ҫавах... тесе хăй тĕллĕн каласса илҫĕ. Унтан сак ҫине ларҫĕ.

Кавăрле амăшĕ сĕтел ҫинҫен пуҫтарса, ҫашки-тиркине ҫуса, пуҫтарса хуҫĕ те, Куҫма ҫумне пырса ларсан:

— Пуҫ ҫавăрнакан ҫир пит усал ҫир ĕнтĕ; сынна пĕтĕмпех типĕтсе, хăртса йараҭ. Турă хăйех сыхлатăр ун пек ҫиртен?—терĕ йĕпе аллисене кĕпи аркипе шăлса.

Куҫма пăртак шухăша кайса ларсан-ларсан, Кавăрле амăшĕ йеннелле ҫавăрăнса:

— Итле-ха, Кĕтерне мăнакка...

— Мĕн калассу пур вара? Кала.

— Мĕн каласси мĕнĕ?.. Хм!... Шухăшларăм та... Хам та, карҫăк та ваҭăлса пыратпăр. Ĕҫлекен ҫук.

Кăҫухнехи саманара тарçă тытса ĕç-леттернин усси пит сахал. Мĕн пур шанҫăк та пирĕн пĕр Уљйана çинҫе анҫах. Кавăрлепе иккĕш те пĕрле ĕçлесе, пĕр çуртра ӳсрĕç. Пĕр пĕ-рин ăсĕсене аван пĕлеççĕ. Çавăнпа „хăталлă-тăхлаҫăлă" пулас тесе шут-латăп. Иккĕшĕн те çулĕсем çитĕннĕ ĕнтĕ. Ху та пĕлен, ман пĕр аҫа çеç. Йут киле парсан, тепле çын лекет. Кавăрлене кĕрӳ туса киле кӳртсен, хам вырăна хуçа пулса пурăнĕ. Ху хăлхупа илтрĕн вĕт, ман çинҫен су-та патăм, тет. Епĕ-и ĕнтĕ сире пăх-ман? Мĕн упăшкуна вĕлернĕренпе ман çăкăра çисе пурăнтăн, вĕт. Е, вăл веç тахçанхине шыраса илес-шĕн çӳрет. Вара, киле тавăрăн-сан калаçса пăх. Ман Уљйана „Ка-вăрле" тесен, сăмах та калас çук. Пĕркунах амăшне: „Кавăрлене киле куртесҫĕ" тесе калана. Карҫăк та килĕштерет. Вăл тавăрниҫҫен ху лайăхрах шухăшла. Хăй килĕштер-сен вара, каçхине иксĕр те пырăр.

Епир хатёрленсе кётсе тăрăпăр. Туйне-мённе, хăйсем тăвас тесен, тăвёç... Тăвас мар тесен... хăйсенђе ирёк, пирён ват çынсен ёçё çук,— терё Кусма, хăй тўрленерех ларса, кёпшек пўрнисене: шарт-шарт! хуçса илђё.

Кётерне мăнакка тарăн шухăша путса ларакансскер: хаш! сывласа, сăмсине шăнкарђё.

— Ман пёртен-пёр ывăлăм, сан çуртна киле пырса кёрсен... Ман йепле пурăнас вара, ватă пуçăмпа?..

— Хм... Хе-хе-хе!... Сана вађђи те ман çуртра вырăн тупăнё. Икё карђăк, пёр старик пёр кётерсе пурăнкалăпăр... Çамрăксене кансёрлемёпёр. Турă хушсан ман пуйанлăх сана та, мана та, ађасене те çитё,— терё Кусма, хăй ђейе куçёсене хёссе, шăлё витёр ђăрт! тутарса сурђё те, хёртнё тимёр пек хёрлё ђёлхипе, хулăн тутисене йăпăл çуласа типётрё.

— Таварӑнсан калаҫса пӑхӑп. Анҫах ман сӑмаха итлес ҫук вӑл. Темӗскер „кумӑн!“ тӑвасси ҫинҫен каласрӗҫ вӗсем пайан Праскипе. „Лайӑх анасене, ҫарансене кастарса илетпӗр те, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑватпӑр“ теҫҫӗ хӑйсем... Кӑҫухнехи ҫамрӑксен шухӑшне ӑҫтан пӗлен?... Ваттисемпе пит калаҫасшӑн мар...—терӗ Кӗтерне мӑнакка ури ҫине тӑрса.

Куҫма ларнӑ ҫӗртен йалт siксе, кӗпшек ӗнси хыҫне каҫӑр-каҫӑр хыҫса: „Йепле пӗтерес ку комунис— Ҫитӑра? Ҫавах пӗтӗм йала пӑтратса пурӑнаҭ. Е-е-еп сана!“—тесе шухӑшларӗ.—Вӑрах та лартӑм, кайас пуљ ӗнтӗ. Каҫхине пырӑр вара. Епир хатӗрленсе кӗтсе тӑрӑпӑр. Халлӗхе сывӑ пул,—тесе алӑ парса, ури ҫине тӑҫӗ те, майӗпен алӑк патнелле утса пырса, тулалла тухса кайрӗ.

Кӗтерне мӑнакка пӑртак тӗлӗнсе шухӑша кайса ларсан-ларсан: „Йепле пит ырӑ кӑмӑлланса кайнӑ-ха

ку?... Ёнер çеç капла марђђĕ-çке?... Ђăнахах хăй хĕрĕ патне Каваŕлене киле кӳртес тет-шим ку?... ие, ахаљ тилĕ пек йăпăлтатса çӳрет-ши?... Тĕлĕнмелле кăђухне?... Те самани пăтраннипе?... Пуйансем хăйсен хĕрĕсене тарçăсене парасшăн?... Ватăлтăм пуљ çав ёнтĕ... çавăнпа та ăнăм пĕтрĕ пуљ... Çамрăксем хăйсем пĕлеççĕ пуљ-ха. Каваŕле ахаљтен кунĕн-çĕрĕн хаçат вуламасŤ пуљ? Хаçат çине ăссăр çынсемех çырмаççĕ пуљ-ха,—тесе шухăшларĕ те, кăмака çинелле кăштăртатса хăпарса выртрĕ.

Çитăрăн тăвата йупа хушшине пураса туна пӳртĕнђе туллийех арçынсем, хĕрарăмсем, ваттисем, çамрăккисем; çилсĕр, лăпкă хĕвеллĕ кун, хурт уйăрнă пек ђухнехи кĕрлеççĕ. Пуринђен ытла хĕрарăмĕсем хăйсен çинçе сассисемпе,арçынсенђен ăмăртмалла кăшкăрашасшĕн тăрăшаççĕ. Ђăнах калана çав авалхи ваттисем: „виçĕ хăрарăм пĕр çĕре пĕрле пул-

сан пуху тăваççĕ“ тесе. Пайан унта виççĕ çеç мар — вуннă, вунпиллĕк те пур; вĕсем пĕр пуху çеç мар, темиçе пуху та тума пултараççĕ. Илтлесе çеç лар. Йалта мĕн пулнине, пулманнине, курнине, курманнине, пурне те пулнă, курнă, илтнĕ пекех каласа параççĕ. Арçынсем калаçни илтĕнмест те, вĕсем ђĕлĕмĕсене паккаса, итлесе çеç лараççĕ. Йакку арăмĕ пуçне каçăртса, сывлăшне çаваймасăр ђупса кĕђĕ те:

— Илтлĕр-ха, йулташсем! терĕ ĕне пек пашкаса.

Пурте шăп пулђĕç.

— Мĕн, мĕн?

— Мĕн пулнă?

— Ăçта, кам?

— Пушар тухнă-им?

— Çу-у-ук! Пуйан Куçма Кавăрлене Улђйани патне киле кўртет, тет?

— Ђăнах-и?

— Ђăнах пулмасăр. Кĕçĕр туй пулмалла теççĕ, вĕт.

— Çука ан калаçҫӗ-ха.

— Ан калаç сана. Ерех илме кайрӗç ӗнтӗ.

— Куçмана Каваӑрле çав тери курайманӑ те вара. Ун хӗрӗ патне киле пырса кӗрӗ. Асту...

— Куçма çинҫен Каваӑрле çиҫӗ çул ӗçленине шыраса сута панӑ, вӗт.

— Ух ҫейе те ку пуйансем.

— Курат ӗç наҫар, хӗрне те шеллемест.

— Пуйансен вӗсен ӑс çитет. Хӗстере пуçласан хӗрӗсене мар, арӑмӗсене те пама хатӗр.

— Каваӑрлене хӗрне парасан, епӗ арӑмне илӗп, мӗншӗн тесессӗн епӗ те ун патӗнҫе икӗ çул ӗçленӗ, пӗр пус та илмен,— терӗ Йакку каҫака сухалне ҫӗтӗретсе.

— Ха-ха-ха!... Пӗр арӑмна тӑрантараймастӑн, тӑшман; Куçма арӑмне илсен выçах вилӗн, вӗт, ухмах, ха-ха-ха!... ахӑлтатса кулнипе Çитӑрӑн тӑватӑ йупа çинҫи пӳрҫӗ ҫут вырӑнӗнҫен хускаласа, çӳлелле вӗçсе

каймасҭ; ҭӳреҭисем тӑр-р-р-тӑр-р-р ҭӗтӗрсе лараҫҫӗ.

— Йе, ҫитӗ ӗнтӗ, йулташсем! Кулса тӑрантӑр пуҭ: пуху уҫар,— терӗ Ҫитӑр сӗтел ҫине кӑранташпа шаккаса. Ҫав вӑхӑтра Праскипе Кавӑрле пырса кӗҭӗҫ. Сасартӑк пурте ҫӑварӗсене шыв сыпнӑ пек, шӑп пулса куҫӗсӗне Кавӑрлепе Праски ҫинелле тӗллерӗҫ.

— Мӗн ҫав тери тӗлӗнсе пӑхатӑр? Курман-им есир пире,— терӗ Праски кулса.

— Ну, йулташсем! Пурте пуҫтарӑнса ҫитрӗҫ пулӗ, ӗнтӗ. Кавӗрле те, пуху пуҫтараканни те килҭӗ. Ҫавӑнпа ҭухӑнсен пухӑвӗ уҫӑлнӑ тесе шутлар. Кун йӗркинҭе пӗр ыйту ҫеҫ тӑраҭ. Пӗрлешуллӗ хуҫалӑх тӑвасси ҫинҭен. Кавӑрле, иртсе сӗтел хушшине лар. Пратаккол ҫыраканни пулӑн есӗ,— терӗ Ҫитӑр ури ҫине тӑрса. Унтан Кавӑрле сӗтел хушшине кӗрсе ларса, куҫӗнҭи карттусне хывса хуҭӗ те, кӑранташ тытса

çыра пуçларĕ. Пурте курак ҫĕппи-сем пек, çăварĕсене карса, Çитăр çăварĕнҫен пăхса кĕтсе тăраççĕ. Ун-тан Çитăр хăрах аллине шăлавар кĕсйине ҫиксе, хăраххипе сĕтел çине тайанса калаçма пуçларĕ:

— Йулташсем, пĕрлешуллĕ хуçа-лăх — хресҫенсене те, пролеттари патшалăхне те усăллă йапала. Кўршĕ йалсенҫе ун пек пĕрлешўллĕ хуçа-лăхсем пур ĕнтĕ; вĕсене есир хăвăр та пĕлетĕр. Пирĕн йалта çук. Ça-вăнпа та епир — ҫухăнсем — пуйан-сен пусмăрĕнҫен тухайман-ха. Пи-рĕн анасене, çарансене пуйансем çавăрса илнĕ те, ĕмсе çеç выртаççĕ. Епир пур ăçта наҫар анасене акса, тункатасен тăрринҫен çулса çўрет-пĕр. Çав пуйансемех пиртен — „на-йансем“ — тесе куçранах кулаççĕ...

— Ку ҫăнах ĕнтĕ.

— Пĕр Куçма çеç çур хире ça-вăрса илнĕ те, тытса тăрать.

— Мĕнле майпа вăл пуйансен аллинҫен çав анасене, çарансене ха-

мăр алла илмелле-ха?—тесе пĕрпĕринпе пăшăлтатса илҫĕҫ.

— Пуйансен аллинҫен вĕçерĕнес тесен, пирĕн йалта пĕрлешӳллĕ хуçалăх—комунă тумалла; вара çав пуйансен аллинҫен çĕрĕсене, çарансене хамăр алла туртса илмелле,— терĕ Çитăр.

— Пĕрлешес апла пулсан.

— Мĕн пăхса тăмалла.

Çитĕ ĕнтĕ вĕсене пирĕн ĕнсе çинҫе ларни,—тесе каллех вĕлле хурҫĕсем пек кĕрле пуçларĕç. Çитăр тарлă çамкине кĕпи çанни вĕçĕпе шăлса илҫĕ те:

— Уçăр-ха çав алăка, пит шăрăхланса çитрĕ,—терĕ.

Кăмака сакки çинҫе ларакан тарланă Йакку тăрса алăка уçса йаҫĕ. Ҫĕлĕм тĕтĕмĕпе çăралнă вĕри сывлăш, пӳртрен тулалла персе тухрĕ; ун вырăнне уçă, сулхăн сывлăш кĕрсе тулҫĕ. Пурте тарлă пиҫĕсене шăлса типĕтсе, уçă сывлăша хыпаланса çăта пуçларĕç.

Çитăр пĕрлешӳллĕ хуçалăх çинҫен йĕрки-йĕркипе каласа панă хыççăн нумай калаççа тăмарĕç. Çавăнтах комунă уставне йышăнса „Патрак“ йатлă пĕрлешӳллĕ хуçалăх турĕç. Вуниилĕк çын ҫлена çырăнҫĕç. Вунулттăмĕш Кавăрле те устав çине алă пусрĕ: Çитăра комун пуçлăхĕ—претçетаттĕлĕ турĕç, ун çумне тата икĕ ҫлен Кавăрлепе Йаккăва суйласа хуҫĕç. Комунă ĕçне йĕркелеме Çитăра хушрĕç. Йалта пĕрлешӳллĕ хуçалăх пулҫĕ.

— Пуху хупăннă тесе шутлатăп,— терĕ Çитăр йулашкинҫен. Пурте савăнăçлă—кулкаласа пӳртрен тухса кайса пĕтрĕç. Хĕрарăмсем тин Кавăрле, Куçма хĕрĕ—Уљйана патне киле кĕрессипе кĕмессине ăнланса илҫĕç. Кайăк хурсем пек какăлтатса килĕсене май утрĕç.

Пухури çынсем саланса пĕтнĕпĕтменех, Çитăр татăк хӳрелĕ çӳрен кĕсрине кӳлҫĕ те, райони çĕр пайне, комун ĕçне йĕркелеме вĕçтерҫĕ.

## V.

Уйав вӑхӑтӗнҫи вӑрӑм кун сисӗнмерӗ те, каҫалла май сулӑнҫӗ. Пӳртсем, кӗлетсем тӑррисене хӗвел ҫути ҫалӑшшӑн ӳксе, мӗлкисем вӑрӑм тӑсӑлҫӗҫ. Кунӗпе тӑрӑ шыв ҫинҫе ишсе ҫӳресе савӑннӑ хур-кӑвакалсем ҫӗппbeing сене йертсе, шӑнкӑлтатса каласса, килӗсене май ҫӑрхаларӗҫ. Кӗтӳҫӗсем тулли ҫилӗлӗ ӗнисене йала хуса кӳртсе йаҫӗҫ. Тарлӑ ӗҫ кунӗ иртсе кайрӗ. Уйар, лӑпкӑ ҫанталӑка каҫхи сӑн ҫапрӗ. Хӗвел аннӑанманах ҫамрӑксем уйавалла утрӗҫ. Кавӑрле те каҫхи апат ҫирӗ те пиншакне тӑхӑнса, тулалла тухма тӑрсан, кӑмана ҫинҫи амӑшӗ:

— Каллех кайрӑн-им ӗнтӗ? Кӗҫӗр Куҫма иксӗмӗре те пыма хушнӑҫҫӗ,— терӗ пуҫне ҫӗклесе.

— Мӗн тӑвай вӑл пирӗнпе?

— Мӗн тӑвасси мӗнӗ... Улҫйани патне сана киле кӳртес пек калаҫрӗ. Ҫавӑнпа пыма хушрӗ кӗҫӗр.

— Ха-ха-ха!... Анне вара санăн ăсу пур-и, çук-и?... Вара манăн каллех Куçма тарçи пулмалла-и?... Çук. Урăх ĕнтĕ епĕ Куçман мар — никамăн та тарçи пулас çук. Пайантан ĕнтĕ епĕ — патрак мар! — „Патрак“ йатлă комунăн — вунулттăмĕш ђленĕ. Куçман Улђйани маншăн нихăçан та арăм пулас çук! Епĕ унăн упăшки мар! Мана... Çӳлти касра пĕр хĕр ӳсет çавă мана кĕтет, — терĕ те, алăкне хăвăрт уçса, тулалла тухса кайрĕ.

Кавăрле урама тухсан, пăртак ђарăнса тăрса: „Тухрĕ-ши“, — тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнђе. Унђђен те пулмарĕ:

— Мĕн пăхса тăран, ут кунталла! тесе çинçе сассипе ђĕнђĕ Праски хăйсен хапхи умĕнђен.

Кавăрле Праски сассине илтсен, ђупнă пек васкаса Çӳлти урамалла улăхса кайрĕ. Праски те Кавăрле çитессе кĕтсе тăмарĕ; пуçĕнђи хĕрлĕ тутăрне тӳрлетсе çыхрĕ те, хирĕç

ђупса анђĕ. Иккĕшĕ пĕрле пулсан, пăртак ђаранса, калаçса тăђĕç те, унтан уйавалла май йунашар утрĕç.

Уйав патĕнђе хĕрсем те, кађђăсем те туллийех. Ик-виç хуткупăс йанăрат. Хăшĕ ташлаççĕ, нумайĕшĕ карталанса алла-аллăн тытăннă та:

— Çĕне путшмак тăхăнсан,
Йепле пўртре ларап
Пăнђăхса.
Савни йыхăрма пырсан,
Йепле унран йулан.
Уйăрăлса...

Тесе йурласа çаврăнаççĕ. Хăшĕсем мăшăрлăн-мăшăрлăн мăшăрланса, вăйăран пăртак уйăрăлнă та — пăшăл-пăшăл калаçса тăраççĕ. Пĕр Улйанан анђах мăшăрĕ çук. Вăл тăлăх хур ами пек вăййа патне пырса тăнă та, пуçне ђиксе тăрат. Кама кĕтет-ши ĕнтĕ? Кавăр лене кĕтсен те вăл унпа выљас çук, унăн хăйĕн мăшăрĕ — Праски пур. Вăййа çитсен Праски Кавăрлен аллисенђен хытă ђăмăртарĕ те:

— Айа ташлар, Кавăрле.

— Çук, манăн пайан пĕртте ташлас килмест. Ташлассу килсен, хăв пĕҫҫен... Епĕ пăхса тăрăп,— терĕ Кавăрле Праски аллине ҫăмăртаса. Унтан Праски вăйă варрине кĕрсе, кĕпи аркине кăшт ҫĕклесе, пиçиххийĕ хушшине хĕстерсе хуҫĕ те, ура хуçса, çĕмĕрт хулли пек авкаланса ташла пуçларĕ. Хуткупăс хартлатнă майпа:

„Ес те кунта, еп те кунта,
Кил-ха, савнийĕм,ташлар;
КурайМансем тăҫҫăр пăхса.
Ату кăлине çаптар“.

— Тесе такмакланă майпа, йухан шыв пек йухаť.

Пурте Праски çине пăхса:

— Айта пултараť хĕрĕ...

Кавăрле йуратнипе çавăнтах тытса, ыталаса ҫуптăвĕҫҫĕ Праскийе; анҫах ытти тантăшĕсенҫен пăртак вăтанаť. Тăнă çĕрте йунĕ вĕренипе çан-çурăмĕ пĕрре вĕриленсе, пĕрре тăр-тăр ҫĕтĕресе илет. Пĕтĕм шухă-

шĕ Праски аллине паранна. Мĕншĕн ан йураттăр-ха вăл Праскийе! Праски, вĕт, ăна çырăва вĕрентрĕ. Халĕ ĕнтĕ вăл Праскирен лайăхрах вулаĭ те, çыраĭ те. Пуйан Куçма аллинҫен те Праскийех çăлса илҫĕ. Çапла Праски çинҫен куçне илмесĕр пăхса тăнă çĕртех, хулпуççийĕ çине пĕр йăвăр алă пырса ўкрĕ. Çаврăнса пăхса Улҹйанана курсан, ҫĕри йĕппе ҫикнĕ пек ыратса кайрĕ. Улҹйанана вăл ĕлĕк те йуратман; халĕ пушшех илемсĕр тăшманăн курăнҫĕ вăл уншăн.

— Мĕншĕн пымастăн? Аттепе анне кĕтсе те ывăнҫĕç пулҹ. Аĭа хăвăртрах,—терĕ Улҹйана, хăй Каврлен кăмăлне йурасшĕн пулса, пашалу пек хулăн тутисене йăл култарҫĕ.

Каварле, Улҹйанан аллине хулпуççи çинҫен сирсе:

— Улҹйана, есĕ вара ҫăнахах сан пата киле пырса кĕрĕ, тесе шутла-

тăн-им? Кай кунтан! Ан тăр ман куç умĕнҫе,—терĕ те, пăрăнса кайрĕ.

Улҗйана пăртак пуçне ҫиксе тăрсан, тăварсăр йашка ҫинĕ пек, ҫавăрăнса килнелле утрĕ. „Праскийех туртса илҫĕ“, тесе шухăшларĕ хăй ăшĕнҫе. Кавăрле ҫине йулашки хут ҫавăрăнса пăхса.

Ҫурҫĕр ҫитрĕ пулас, автансем ку-ку-ре-ку-у-у авăтса йаҫĕç. Вăйăри ҫамрăксем пĕҫҫĕкҫĕн саланса пĕтрĕç, Праскипе Кавăрле те алла-аллăн тытăнса, тем ҫинҫен пăшăл-пăшăл калаçса килелле утрĕç.

Ҫамрăксем выҗанипе кĕрлесе тăракан урамсем каллех лăпланҫĕç. Ҫĕрпе пĕлĕт хушшинҫен кивĕ уйăх авăрсăр ҫурла пек ҫĕкленҫĕ. Анҫах нумайах ҫутатса тăраймарĕ; шурăмпуç шуралса килнипе ҫути ҫасах пĕтрĕ. Ҫăн тӳпере ҫӳхенсе тăракан пĕр ҫут ҫăлтăр, тăнă ҫĕртех тĕксĕмленсе, йар йарăнса кайса курăнми пулҫĕ.

Кавăрле тавăрăнасса, ҫывăрмасăр, кĕтсе выртакан амăшĕ:

— Пĕр ҫын вилђĕ пулас, ҫăлтăрĕ ҫĕре ӳкрĕ,— тесе кăмака ҫинђе калаҫса илђĕ хуллен.

— Ҫăлтăрсене суса ан вырт ĕнтĕ, анне. Ҫывăр. Иртнĕ каҫ та ҫывăрма памарăн, ҫĕрĕпе калаҫрăн,— терĕ Кавăрле ҫывăрма выртса.

## VI.

Ҫитăр тепĕр кӳнне ирех, ҫĕр пайĕнђе комун ĕҫне пĕтерсе, хăйпе пĕрле ҫĕр викҫекен ҫемлемер лартса тавăрăнђĕ. Ҫемлемерĕ те комунис пулас, мĕншĕн тесен Ҫитăр йуррине йурлаť: Ҫитĕ ĕнтĕ пуйансене — лайăх ҫĕрсене, ҫарансене тытса тăни... Ђухăнсене ђерет ҫитрĕ, тет.

Кавăрле, Ҫитăр ҫемлемер илсе таврăннине пĕлсен, ирхи апат тумасăрах, васкаса тумланђĕ те, урама тухрĕ. Пăхаť, Пуйан Куҫма хапхи умне ађа-пăђасем, арҫынсем, хĕрарăмсем унтан та, кунтан пуҫтарăнаҫ-

çĕ. Тимĕр витнĕ пӳртĕн уçă ҫӳреҫинҫен:

— Ай, хĕрĕм! Мĕн пулҫĕ сана? Мĕн çитмерĕ? У-у-у,—туса амăшĕ йĕнĕ сасă илтĕнет. Каварле пăртак ҫарăнса „Улйнана çураçнă-шим?.. Мĕнле пит ҫас туйне тăваççĕ?.. Кам ухмахĕ илет-ши?... тесе шухăшларĕ те Çӳлти кассалла васкаса утрĕ. Çитăр хапхи умне çитсен Йакку арăмне хирĕç пулса:

— Улйанана çураçним, халăх пухăнаť?—тесе ыйтрĕ. Йакку арăмĕ тăп ҫарăнса:

— Çавна та илтмени-ха есĕ?... Çураçнă сана, леш тĕнҫене...

— Мĕнле леш тĕнҫене?

— Иртнĕ каç вăйăран тавăраннă та, кĕлетне кĕрсе çакăнса вилнĕ.

— Ҫăнах-и?

— Ҫанах пулмасăр. Çуса тупăка вырттарнă ĕнтĕ. Пайан пытармалла. Çавăнпа халăх пуçтарăнаť,—терĕ Йакку арăмĕ.

— Е-е-е... Апла иккен-ха ĕççем... Хĕрĕ пĕтнĕ, аппĕпе амăшĕ ҫас пĕтеççĕ-ши?... Вĕсене те пĕрлех пытарăттăмăр-ҫҫĕ. Ăçта кайман пĕр кун; кайса шăтăк алтса панă пулăттăм, — терĕ Кавăрле.

Унтан пуçĕнҫи карттусене хывса, çӳçне аллисемпе йакатрĕ те, Ситăр килкартинелле кĕрсе кайрĕ. Йакку арăмĕ Кавăрлене куçĕпе ăсатса, пăхса тăрса йулҫĕ: „Пĕртте шеллемест çак Кавăрле пуйансене... Хĕрĕ вилни çитмен-ха. Аппĕпе амăшне те пытарасшĕн тата. Нумай тарăхтарнă пулҫ çав... Çавăнпа та кураймасҭ. Варне витнĕ,— тесе шухăшларĕ те Анат кассала васкаса анса кайрĕ.

———

Хакĕ 30 пус

Цена 30 коп.

х.

На чувашском языке

М. ДАНИЛОВ. Рассказы.

ЦЕНТРИЗДАТ НАРОДОВ СССР
Москва, центр, Никольская, 10